# Уявпа ăшшăн саламлатпăр!

ХЫПАР
1997 çулхи кăрлачăн 30-мĕшĕнче тухма пуçланă

Анне, аппа та йăмăк, мăшăр… Эсир пуртан кил-çуртăм ăшă

# Чăваш ХĔРАРĂМĔ

9(827) №, 2014, пуш, 7

Хакĕ ирĕклĕ.

16+

Хаçата электрон адреспа та çыру çырма пултаратăр: zuwxeraram@mail.ru.

## Саламлатăп

**Хаклă хĕрарăмсем!**

Сире çурхи чи илемлĕ уявпа – Пĕтĕм тĕнчери хĕрарăмсен кунĕпе – чун-чĕререн саламлатăп!

Çак тĕнчене эсир пурнăç, шанчăкпа юрату илсе килетĕр. Пирĕн пурнăç сирĕн ăшă аллăсемсĕр, хĕм сапакан куçсемсĕр, ырă чĕресемсĕр мĕнлерех пуласса калама та йывăр.

Паян хĕрарăмсем професси тĕлĕшĕнчен пысăк ăсталăх, яваплăх кăтартса ĕç-хĕлĕн тĕрлĕ тытăмĕнче курăмлă çитĕнӳсем тăваççĕ.

Кашни хĕрарăмăн патшалăх тăрăшнине туймалла, ыранхи куна шанса пурăнмалла, çавăнпа ача амăшĕпе ачине хӳтĕлесси, çемье институтне çирĕплетесси Чăваш Республикин Правительствишĕн тĕп тĕллевсем пулса тăраççĕ.

Нумай ачаллă çемьесене тĕрлĕ енĕпе укçа-тенкĕпе пулăшаççĕ, пурăнмалли çурт-йĕр тума, хушма хуçалăх йĕркелеме çĕр лаптăкĕсем уйăраççĕ. Чăваш Ен Раççейре шкул çулне çитменнисен организацийĕсене çӳретмешкĕн черетсене хăвăрт пĕтерсе пыракан регионсен шутне кĕрет. Кăçал çеç республикăра 14 вырăнта çĕнĕ ача сачĕсем уçасшăн.

Патшалăх çакнашкал политика тытса пынин усси куç кĕрет. 2012 тата 2013 çулсенче республикăра халăх йышĕ ӳснине регистрациленĕ, ку – Чăваш Енре пулса иртекен улшăнусен чи лайăх хаклавĕ!

Уяв ячĕпе сире, хаклă, юратнă çыннăмăрсем! Тăванăрсемпе çывăх çыннăрсем сирĕншĕн тăрăшни, вĕсен ăшă туйăмĕсем пурнăçри йывăрлăхсенчен хӳтĕлеччĕр, тăнăçлăхпа ăнăçлăх çирĕп çемьесем çавăрмалли, пурте кĕтекен ачасем çуралмалли тĕп никĕс пулччăр.

Сире ыră сывлăх, килĕшӳлĕх, лайăх кăмăл-туйăм, телейпе савăнăç сунатăп! Чун-чĕрере яланах ăшă пултăр!

**Чăваш Республикин Пуçлăхĕ М.ИГНАТЬЕВ.**

***Николай АГАКОВ***

* * *

Хĕрарăм – чĕрĕлĕх тымарĕ,
Чи тӳсĕмли вăл, чи сумли.
Хĕрарăм – тăнăçлăх кăварĕ,
Чи сăвапли, чи явапли.
Хĕрарăм – шанăçлăх çăл куçĕ,
Вăл – пурнăçăн телей çути.

Хĕрарăм – ăслă, вăл – ертӳçĕ,
Йăл култăр савăнса тути.
Хĕрарăмпа тĕпел илемлĕ,
Апатпала пуян сĕтел.
Ун ăшшипе çемье телейлĕ,
Вăл мăшăршăн – сӳнми хĕвел.

## ÇАНТАЛĂК

| | кăнтăрла | çĕрле |
|---|---|---|
| 07.03 | - 1 | - 3 |
| 08.03 | 0 | - 6 |
| 09.03 | 0 | - 3 |
| 10.03 | + 2 | - 4 |
| 11.03 | + 1 | - 2 |
| 12.03 | 0 | - 4 |
| 13.03 | + 4 | 0 |



Олег МАЛЬЦЕВ сăн ӳкерчĕкĕ.

5 стр.

# Ăслăлăхри хĕрарăм сăнĕ

**Сĕм авалтан хĕрарăмсем ăслăлăх çулĕ çинче йĕр хăварнă. Вĕсен йышĕнче – Гипатия Александрийская, Ада Лавлэйс, Табита Бэббит… Вĕсем космос уçлăхне тĕпченĕ, ЭВМ машини, циркуляр пăчкă… шухăшласа кăларнă. Пирĕн тăрăхра та кулленхи пурнăçа çĕнĕлĕх кĕртекен хĕрарăм сахал мар.**

**«Раççейри çамрăк ăсчахсен пĕрлĕхĕ» организацин Чăваш Енри уйрăмĕ «Ăслăлăхри хĕрарăм сăнĕ» конкурс йĕркелессине йăлана кĕртрĕ. Унта аслă шкулта, колледжра, техникумра, гимназире пĕлӳ илекенсен тата вĕрентекенсен хăйсен пултарулăхне кăтартма май пур. Кăçал жюри членĕсем Шупашкар, Çĕнĕ Шупашкар, Канаш, Çĕрпӳ, Вăрнар ăсчахĕсен 56 ĕçне пăхса тухнă, хак панă. Конкурса пĕлтĕрхи пекех Пĕтĕм тĕнчери хĕрарăмсен уявĕ умĕн пĕтĕмлетрĕç.**

### Куçран вĕçертмеççĕ

Раççейри çамрăк ăсчахсен пĕрлĕхĕн регионти уйрăмĕн ертӳçи Майя Стороненко 2013 çулти çĕнтерӳçĕсене аса илчĕ, вĕсен пурнăçĕпе кăсăклансах тăнине палăртрĕ. «Эпĕ асамçă мар, вĕренетĕп кăна...» номинацире мала тухнă Çĕнĕ Шупашкар хĕрĕ Оксана Егорова, тĕслĕхрен, Мускаври гимназие вĕренме кĕнĕ. Çак конкурс ăна хăйĕн вăйне шанса малалла ăнтăлма пулăшнă. Вăл пĕлĕвне тарăнлатса тăван тăрăха таврăнмашкăн сăмах панă.

«Ăслăлăхри амăшĕ» ята тивĕçнĕ Ольга Ергунова регионти технологи тата управлени институчĕн проректорĕнче вăй хунине, бизнесра çитĕнӳсем тунине асăнчĕ Майя Геннадьевна. Кăçал та конкурса хутшăнма кăмăл тунă вăл. Тӳрех асăнса хăварам, хальхинче икĕ ача амăшĕ «Ăслăлăхри бизнес-леди» ят çĕнсе илчĕ.

«Леди-çĕнĕлĕх» номинацире палăрнă Ирина Ершова ытти çĕр-шыв ăсчахĕсемпе çыхăну йĕркелес тĕлĕшпе ĕçленине ырларĕç. Пĕлтĕр Бакури конференцире сăмах илнĕ вăл. Хăйĕн докладне акăлчанла хатĕрленĕ. Халĕ Раççей, Польша, Германи, Литва, Азербайджан... ăсчахĕсем пĕрпĕринпе скайп урлă хутшăнаççĕ. Кăçал Ирина Ершова Будапештри конференцие хутшăнĕ.

### Паянхи çĕнтерӳçĕсем

ЧР вĕрентӳ министрĕ Владимир Иванов Авалхи грексен халапĕсенче те хĕрарăм турăсем искусствăпа наукăна аталантарма пулăшни çинче чарăнса тăчĕ. Апла тăк паянхи çĕнтерӳçĕсем – вĕсен тăсăмĕсем.





ПУЛТАРУЛĂХ

# Илем кӳме çуралнă çĕр çине,

## Е 80-ра та хĕр пекех ташлакан хĕрарăм çинчен



**Бал ташши – чуна çӳçентерекен илем, çĕкленӳлĕх, çăмăллăх... Кӳкеçри культурăпа кану центрĕнче Валентина Васильева балетмейстер ирттерекен репетицирен хавхаланса таврăнтăм, «Илем» халăх ансамблĕн ташăçисене куç илмесĕр пăхса килентĕм. Уроксем хыççăн вăтам ушкăнпа, Шупашкар районĕнчи Иккасси шкул ачисемпе, чăваш лирика ташши хатĕрлетчĕç. Кăçал кăна-ха вĕсем валли 8 кĕпе çĕлеме вăй çитернĕ клуб. Хĕр ачасем çавсене тăхăнчĕç те чăн-чăн акăша çаврăнчĕç. Çĕнĕ костюмпа пĕрремĕш хут нарăс уйăхĕнче, Валентина Евлампьевна 80 çул тултарнине халалласа ирттернĕ пултарулăх каçĕнче, ташланă вĕсем.**

### Аслă ăру

Районти мероприяти «Илемсĕр» сайра иртет. Çулсене парăнман балетмейстер ЧР культурăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ Валентина Васильева миçе ăрăва ташă ӳнерĕпе паллаштарман-ши?

«Валентина Евлампьевна Кӳкеçри шкулта химипе биологи вĕрентетчĕ, ача-пăча пултарулăх çуртне ун патне ташлама çӳреттĕмĕр эпир. Ӳссе çитсен шăпа аякра тĕпленме пӳрчĕ. 45 çул иртсен кăна тăван тăрăха таврăнтăм. Юратнă учителе ăнсăртран куртăм та вăл çаплах ташланинчен тĕлĕнтĕм. Мана та аслă ăрурисен ушкăнне чĕнчĕ. Ăна çав тери хисепленĕрен хирĕçлеме хал çитмерĕ. Акă ĕнтĕ пилĕк çула яхăн эпĕ клуба çӳретĕп», – каласа кăтартрĕ репетицие килнĕ Владимир Власихин, тивĕçлĕ канури çар çынни. Тамара Надольская та чылайранпа чун киленĕçне культурăпа канă çуртĕнче тупнă, юрлама та, ташлама та ĕлкĕрет. «Эпир клуба ĕçе килнĕ пекех çӳретпĕр. Клуб пире валли тахçанах çĕнĕ костюм уйăрмасть, çакă пăшăрхантарать. Укçа шеллемесĕрех темиçе кĕпе хамах çĕлеттертĕм. Шкапри пур кĕпепе те сцена çине тухрăм ĕнтĕ... Пирĕнпе, аслă ӳсĕмрисемпе, ĕçлеме Валентина Евлампьевнăна йывăр килет те пулĕ. Шăм-шак çамрăк чухнехи пек мар-çке çапах та. Çапах яланах ăшшăн кĕтсе илсе ăсатать вăл. Акă чăваш ташши вĕреннĕ чухне хĕрарăмсенчен пĕри хусканăва ниепле те алла илеймерĕ. Çавна 40 хутчен туса кăтартма тиврĕ вĕт! Тăрăшсан упа та ташша вĕренет тени тĕрĕсех иккен!» – палăртать хĕрарăм. Коллектива ӳстерес тĕллевпе ушкăна тӳлевсĕрех йышăнаççĕ пулин те халăха илĕртме çăмăл мар-мĕн, уйрăмах арçынсем çитмеççĕ.

### Ачаранпах илĕртнĕ туйăм

Кĕçех Вена вальсĕ янăраса кайрĕ те, мăшăрсем хитрен шуса тухрĕç... Çав вăхăтра Валентина Евлампьевнăна сăнатăп: унăн сăнĕ-пичĕ çуталса кайрĕ, яштака кĕлетки халь-халь çӳле вĕçес пек. Композицисене хăй те хутшăнать вăл. Сцена çинче тухсан вара кĕвĕпе ташă тĕнчине пуçĕпех путать. Хусканăвĕпе тепĕр хĕртен те ирттерекенскер пирки 80-ра тесе те калаймăн. Çĕр çине илем кӳрессишĕнех çуралнă-тăр тĕлĕнмелле çак хĕрарăм. Йăх-несĕлĕн пултарулăхне сыхласа, çĕнетсе аталантарассишĕн тăрăшать вăл. Вырăс, Европа, Латинла Америка, историпе йăла-йĕрке ташшисене те сцена çине кăларать.

Вăй-хăват паракан туйăм ăна пĕчĕк чухнех илĕртнĕ те унран йывăр ачалăхри выçлăхпа чухăнлăх та сивĕтеймен. Ăсталăхне вăл шкулта учительте ĕçленĕ вăхăтра Шупашкарти музыкăпа драма театрĕ çумĕнчи балет студийĕнче туптанă. «Шывармань», «Чапай» оперăсенче, «Лебединое озеро», «Жизель» балетра, «Запорожец за Дунаем», «Мэри Ив летит в Москву» оперетăсенче ташланă.

### Телей кӳрекен ĕç

Çемье пурнăçĕ пирки Валентина Васильева калаçма юратмасть пулĕ тенĕччĕ... «Упăшка пулнă арçын – ЧР халăх артисчĕ. Анчах унпа эпир нумай пурăнаймарăмăр. Тахçанах хутшăнма пăрахнă. Кăмăлĕ те кăраччĕ, ют хĕрарăмсене юрататчĕ тата... Ывăлăма пĕчченех çитĕнтертĕм, ашшĕнчен пулăшу пачах курман эпир», – пытармарĕ вăл. Пĕртен пĕр тĕпренчĕкĕн çемйи, мăнукĕсемпе хавхалантарнине пытармарĕ.

Хĕр чухнехи пекех йăрăс кĕлеткине мĕнле упранипе те кăсăклантăм.

«Вĕçĕмех хусканура тата сахалтарах çиме тăрăшатăп – вăрттăнлăхĕ çакă çеç», – уçăмлатать ташăпа пурăнаканскер, юратнă ĕç пурришĕн, вăл киленӳ кӳнишĕн хăйне телейлисен йышне кĕртсе.

**Алина ИЗМАН.**
**Автор сăн ӳкерчĕкĕ.**

ТĔСЛĔХ ШАЙĔНЧЕ

**Ираида Кирилловна выльăх пăхакансемпе пĕрле ял хуçалăх производство кооперативĕн кĕлетне çăнăх илме килнĕччĕ. Ялти ĕçлĕ çынсене чăрмантарма та аван мар тепĕр чухне. Кашни самант шутра вĕсен. Халĕ те васкавлăн тиерĕç те тракторпа фермăна вĕçтерчĕç.**



# Ферма хĕрĕ

Ирăна пĕчĕк чухнех колхоз пăрăвĕсем питĕ илĕртнĕ. Амăшĕн кĕпи аркинчен тытăнса кашни кун фермăна васканине халĕ те ас тăваççĕ ялти ватăсем. Ир-ирех тăрса пĕчченех çитсе ларни те нумай пулнă. Уроксем хыççăн та тӳрех амăшĕ патне вĕçтернĕ. Пăрусем пăхнă, ĕне сунă... Пĕр ĕçе те тиркесе тăман пĕчĕк хĕр. Çавăнпах шкул пĕтерсен те ниçта та каяс темен. Пĕр çул почтальонра ĕçленĕ хыççăн вун саккăрти хĕр хаваспах фермăна вырнаçнă. Çав хушăра Шупашкарти «Нива» производство кооперативĕнче кĕске курссем иртнĕ. Ĕçчен хĕре Апакасси каччи куç хывать. Кăштахран икĕ юратнă чун çемье çавăрнă. Хунямăшĕ те ĕне сăваканрах ĕçленĕрен пĕр чĕлхе тупма йывăр пулман çамрăк кине. Качча килнĕ çуртра хăй хĕрĕ вырăннех йышăннă ăна.

Виçĕ хĕрпе икĕ ывăл çитĕнтернĕ Ираида Кирилловнăпа Александр Мефодьевич. Вĕсене те пĕчĕклех тăван çĕре, выльăх-чĕрлĕхе юратма хăнăхтарнă. Çемьере пĕрмай: «Тар тăксан кăна шур кулач çиме пулать», – тесе каланине ăша хывнах ачисем. «Куршанак çыпăçнă, куршанак çыпăçнă» тесе вăрçтарнине халĕ те манса кайман-ха вара. Ираидăн мăшăрĕ те, хĕрĕ те, шăллĕсем те ял хуçалăхĕнче вăй хураççĕ.

56 çула кайнă Ираида Александрова ферма пуçлăхĕ кăна мар, ветеринар та, ĕнесене искусствăллă майпа пĕтĕлентерекен те. Тĕрĕссипе, пĕр ĕçе те тиркесе тăмасть. Выльăх пăхакансемпе пĕрле силос та, утă-улăм та тиеме çӳрет. Тепĕр тесен, кунти ĕçе унран лайăхрах пĕлекен çын пур-ши. 30 çул ытла тăрăшать вăл çак хуçалăхра.

Ăçтан ĕлкĕрет-ши мăнтарăн хĕрарăмĕ? Килте те пысăк хуçалăх. Вăкăрсем, сыснасем самăртаççĕ. Картиш тулли чăхчĕп, хур-кăвакал. Ял халăхĕнчен сĕт пуçтарманран пĕр ĕне кăна тытаççĕ. Ачисене, мăнукĕсене май пур таран пулăшас килет вĕсен. Ал-ура сывă, вăйхал пур чухне ĕçлес теççĕ. Телевизор умĕнче ларма хăнăхман.

– Выльăх-чĕрлĕхсĕр пурăнаймастпăр эпир. Чуна лăплантарать вăл, пăшăрханни те хăвăртах иртет. Ĕçлекен çын çамрăкрах туять хăйне, шалта, чун тĕпĕнче temĕнле вăй-хăват малалла талпăнма хавхалантарса тăрать, – тет хĕрарăм.

Кун мĕнле иртнине те сисмеççĕ Ираидăпа Александр Александровсем. Ир-ирех тăрса килти выльăха апатлантараççĕ, вите тасатаççĕ, кайран ĕçе васкаççĕ. Çĕрлесĕр те ĕç пĕтмест вĕсен хуçалăхĕнче. Ларса канма вăхăт çук пулин те выльăх-чĕрлĕхре киленӳ тупнă иккĕшĕ те.

– Аш-какай, сĕт-çупа çăмарта, пахча çимĕç хамăрăн. Пахалăхлă апат çисе пурăнатпăр ялта. Кашни кунах уçă сывлăшра пулни кăмăла çĕклентерет, пуç ыратнине те ирттерет, – тет Ираида Кирилловна. Хула пурнăçĕ нихăçан та илĕртмен ăна.

Александровсен хуçалăхĕ Апакассинче чи тирпейлисенчен пĕри. Çуллахи вăхăтра картиш тулли чечек çитĕнтереççĕ. Капанĕ-капанĕпе утă-улăм хатĕрлеççĕ. Çу кунĕсенче ачисемпе мăнукĕсем валли те ĕç туллиех. Пĕчĕкскерсем те кĕреплесенĕк сĕтĕрсе уй-хире утаççĕ. Хĕлле те, çулла та кичемленсе ларма вăхăт çук ку çемьере. Ачисем, мăнукĕсем пухăнсан кил-çурт тата та илемленет вĕсен, кĕрлесе кăна тăрать.

Икĕ хутлă çурт хăпартса лартнă Александровсем. Маларах çунса та кайнă, çапах ура çине тăнă.

– Ĕлĕкхи пек мар халь, кĕтӳ пысăк мар, выльăх йышĕ фермăра та, уйрăм хуçалăхра та чылай чакнă, уншăн та чун ыратать. Çамрăксем ялта юласшăнах мар, – тет пăшăрханса çемье управçи.

Ыррине шанакан, пурнăçа йĕркелесе пыма пĕлекен мал ĕмĕтлĕ çын хăть ялта, хăть хулара – ниçта та çухалса каймасть. «Аякка тухса каймасăрах, ялтах ытлăçитлĕ пурăнма май пур, ӳркенмелле мар кăна», – теççĕ Александровсем. Çирĕп кăмăллă та вăйлă çынсем кăна тӳрĕ çул çинчен пăрăнмасăр малаллах талпăнаççĕ, чун юратнă ĕçре киленӳ тупса хитре пурнăç йĕркелеççĕ.

**Елена АТАМАНОВА.**
Çĕрпӳ районĕ.
**Автор сăн ӳкерчĕкĕ.**

ЧУНРИ

# Ирхи тĕлĕкĕм

...Килте ăшă. Кăмакара кăмпа яшки чашлатса вĕрени илтĕнет. Вутă шартлатса çунать. Çатмара икерчĕ пиçет. Ăна сĕтел çине купаласа хунă. Анне ирех тăнă та кăмака патĕнче кăштăртататать. Эпĕ паçăрах вăраннă, çапах тата çывăрас килет пек. Манăн кĕçех шкула каймалла. Акă хĕвел пайăркисем урайне ӳкрĕç. Тулта автан авăтать, ĕне сас парать. Чăваш хĕрарăмĕсем тем тума та ĕлкĕрнинчен тĕлĕнетĕп. Ачисене пăхмалла, кил таврашне тасатса тăмалла, ĕçе каймалла вĕсен. Анне мана ăшшăн вăратса сĕтел хушшине чĕнсе илчĕ, çуллă икерчĕ тыттарчĕ.

Эпĕ савăнса шкулалла чуптартăм. Манăн ура тупанĕ кăна курăнса юлчĕ пулĕ.

Анне юнашар пулсассăн пурнăç илемлĕ. Юратăр, упрăр ăна! Май пур таран пулăшма тăрăшăр! Анне ăшшин хĕлхемĕ яланлăхах пирĕн чуна кĕрсе вырнаçать. Ахальтен мар çывăх çыннăмăра ырăпа çеç аса илетпĕр.

**Любовь АЛЕКСАНДРОВА.**

ШУХĂШ

# Хĕрарăм – вучахри кăвар та, пулăхлă тăпра та

Китай ăславçисем ĕлĕкех çакăн пек пĕтĕмлетӳ патне килсе тухнă. Хĕрарăмăн пĕртен пĕр тĕп тивĕçĕ – мĕн пĕчĕкренех âша вăй пухса пырасси, ăна упрасси. Çавăн пек чун çунтармăш патне арçыннăн, чĕрĕ шыв çăл куçĕ ĕçме пынă евĕрех, вăй-хăват илмешкĕн вĕçĕмех таврăнас килет. Ывăннă хĕрарăм, типсе ларнă çăл пекех, арçынна пулăшаймасть, унăн ăш хыппине иртерреймест. Кил-çуртри мĕн пур ĕçе хĕрарăм çине тиени – йăнăш. Унăн чуна килĕшекеннипе кăна аппаланмалла, унтан çеç вăл киленӳ илĕ. Савăнăç кӳмен ĕç кӳлештерет, вăя «çиет», çакăншăнах çумри арçыннăн та ăнăçу çулĕ хупăнать, йывăрлăх сиксе тухать.

Хăйĕншĕн тата çемйишĕн тĕп тивĕçне пурнăçа кĕртмешкĕн кирек мĕнпе аппалансан та хĕрарăмăн çав ĕçе юратса пурнăçламалла. Юрлать-ташлать-и, ӳкерет-и, ал ĕçĕ тăвать-и, чи кирли – чун выртни. Унтан вăл хăйĕн çывăх çыннисем валли савăнăç, илем, çутăлăх хĕлхемĕ илĕ. Хĕрарăм, пулăхлă тăпра пекех, кирек епле вăрлăхран та арçынна пуян çимĕç парнелет. Вăл тулăх ӳстĕр тесен çĕрĕн те канмалла-çке. Арăмĕ кунĕпе тĕкĕр умĕнче вăхăта ирттернĕшĕн арçыннăн ятлаçмалла мар, ан тив, тулли телейпе çиçмешкĕн хăй илемлине туйтăр хĕрарăм. Çепĕç сăмахран, ун хитрелĕхне мухтанăран вăл татах та çемçерех, илĕртӳллĕрех курăнĕ, чечек евĕр сарăлĕ. Хăйĕн мăшăрне мĕнле майпа татах та чиперлентермеллине ăслă арçын пĕлетех, ăна пурнăçа кĕртмешкĕн пулăшатех. Хĕрарăм – вучахри кăвар, тĕлкĕшсе, хĕмленсе тăмашкăн ăна вут-çулăм кирлĕ, унăн çумĕнче âшăнмашкăн арçыннăн нимĕн те хĕрхенмелле мар: ăнăçлă кашни ар хыçĕнче хĕрарăм тăрать.

Китайсен ăс-хакăлĕпе кăсăкланса пуçа çĕмĕрттернĕ май теорие практикăна çыхăнтарма тăрăшрăм, чăваш арĕсем патне таврăнтăм. Тĕслĕх вырăнне пĕлĕшĕм аса килчĕ. Ун пирки ялта: «Арăмне юратакан Валерка», – теççĕ. Арăмĕ ĕçрен таврăнасса хапха умне тухса кĕтсе илет вăл, мăшăрĕ çие юлнă чухне чейник те йăттармастчĕ. Парнепе е чечекпе савăнтарма та уяв пуласса кĕтсе лармасть арçын. Урай çума та, апат пĕçерме те ӳркенмест, вырăх-чĕрлĕхе те арăмĕпе пĕрле пăхаççĕ. Чăнах та, мăшăрĕ çулран-çул çамрăкланса пырать тейĕн, сăн-питĕнчен йăл кулă таталмасть. Хирĕçле тепĕр тĕслĕх те аса килчĕ. Нумай ачаллă ашшĕ пур ĕçе те арăмĕ çине тиенĕ, киле хăй çĕрле кăна таврăнать, чылай чухне – ӳсĕр. Кун каçипе килте çуккине кура çемйине укçи-тенкĕпе пулăшать тесе шухăшлатăр тăк – йăнăшатăр. Вичĕ ĕне сĕтне сутса çемйине тăрантарать арăмĕ. Йĕркеллĕн канаймасть те мăнтарăн, тен, çавăнпа хăйĕн ӳсĕмĕнчен чылай аслă курăнать. Тĕкĕр умĕнче капăрланма мар, çӳçне турама та вăхăт çук унăн. Шел те, чăваш арçынĕсем мăшăрне упрама та, хаклама та пĕлеймеççĕ. Китай ăсчахĕсем тĕрĕсех калаççĕ апла тăк: çавăнпах хăйсене ура хураççĕ вĕсем, пурнăç тилхепине те çирĕппĕн тытса пыраймаççĕ. Ирĕксĕрех хĕрарăмăн пур яваплăха хăй çине илме тиврĕ.

Этемлĕхĕн черчен çуррийĕн тĕп тивĕçĕ – ача çуратса тивĕçлĕ воспитани парса ӳстересси, килти хуçалăха тытса пырасси теттĕмĕр те, анчах çак вăхăт та хыçа юлчĕ ĕнтĕ. Хĕрарăм-политик, тухтăр, строитель... Вăл тĕрлĕ сферăра арçынпа тан ĕçлеме пултарнине çирĕплетрĕ. Автомобиле «çăварлăхлама», инженерире тĕшмĕртме, тĕнче уçлăхне хăпарма, мĕн ĕмĕтленнине йăлтах пурнăça кĕртме пултарчĕ. Çапах та карьерăн çӳлти картлашки çине хăпарнăскер темĕн самантра хăй умне ыйту лартать: çемье хаклăрах-и е ĕç-и? Хĕрарăм ăнăçулăхне унăн çемйи, ачи-пăчине кура хаклаççĕ-çке.

Ачана укçа париччĕн тимлĕхпе юрату уйăрма хушнă, витĕмĕ те урăхларах пулĕччĕ. Çывăх пĕр тусăм та ачине асламăшĕпе хăварса Мускава ĕçлеме тухса кайнăччĕ. Çав хушăра ывăлĕ шкула çӳреме пăрахрĕ вĕт... Амăшĕ йăлтах пăрахса каялла таврăнчĕ. Ĕç валли те, çемьешĕн те вăхăта шайлашуллă йĕркелеме пĕлмелле çав.

Çывхарса килекен Хĕрарăмсен пĕтĕм тĕнчери уявĕнче пирĕнтен кашниех âшă сăмаха, парнене тивĕçтĕрччĕ. Çунатлантарма, телейпе çиçме нумай та кирлĕ мар-çке хĕрарăма. Хăйне ырă суннăшăн вăл каялла та çавăн пекех, анчах пин-пин хут ытларах âшăпа тавăрĕ, çĕкленӳллĕ кăмăлĕпе, Китай ăсчахĕсем калашле, пурне те çупăрлĕ.

Алина ИЗМАН.

МАТТУРСЕМ

# Шăпчăкран кая мар

**Ытлари кун ЧР культура министрĕ Вадим Ефимов Сочире хĕллехи Олимп вăййи хупăннă чухнехи чаплă уяв каçĕнче юрланă «Шăпчăксем» / ертӳçи Александра Васильева/ ушкăн ачисемпе тĕл пулчĕ**



Шупашкарти ача-пăча музыка 5-мĕш шкулĕн вĕренекенĕсем пĕлтĕр Краснодар тăрăхĕнче иртнĕ конкурса хутшăннă. Кайран, кăрлач уйăхĕн пуçламăшĕнче, Санкт-Петербургри Мариинка театрĕнче репетицире пулнă. Кунта Раççей Президенчĕ Владимир Путин та хутшăннă.

Раççей ача-пăча хорне пирĕн çĕршыври 83 регионри çамрăк юрăçсенчен йĕркеленĕ. Унта пултарулăхпа палăрнă Чăваш Ен ачисене те суйласа илнĕ. Çак проекта Пĕтĕм Раççейри хор пĕрлĕхĕн ертӳçи, дирижерĕ Валерий Гергиев пуçарса янă. Олимп вăййисен йĕркелӳ комитечĕ кашни регионран вуннăран пуçласа вун тăватă çула çитиччен вунă юрăçа суйласа илме йышăну тунă. Çавăнпа та ушкăн хушшинче тепĕр суйлав иртерме тивнĕ.

– 46 ачаран чи вăйлă та илемлĕ сасăллисене, хулари ахаль çемьесенчи ачасене суйласа илтĕмĕр, – пĕлтерчĕ Шупашкарти Ф.Лукин ячĕллĕ ача-пăча музыка 5-мĕш шкулĕн директорĕ Наталья Толокнова. Сăмах май, музыка çак шкулĕ 1998 çултанпах ĕçлет. Кунта вĕренникенчен чылайăшĕ Раççей аслă шкулĕсенче пĕлĕве малалла тăсать.

Кăçал хĕллехи каникулта та канман хорта юрлакансем. Вĕсем аслисемпе тан ĕçленĕ. Талăкне 5-шер сехет репетици иртнĕ.

Кăрлачăн 8-мĕшĕнче Мариинка театрĕн сцени çине Раççейĕн мĕн пур кĕтесĕнчен килнĕ 1 пин ача тухнă. Валерий Гергиев ертсе пыракан оркестр кĕвви тăрăх Исаак Дунаевскин «Летите, голуби», Аркадий Островскин «Пусть всегда будет солнце» тата ытти чылай паллă юрра шăрантарнă.

Çула тухас умĕн шăпчăкран кая мар юрлакан çамрăксемпе хула пуçлăхĕ Александр Черкесов тĕл пулнă, ăнăçу суннă.

Олимп вăййисем хупăннине телевизорпа куртăмăр. Концерт пуçламăшĕнче чаршава çĕкленĕ хыççăн 1000 ача сасси тыткăна илекен пĕр таса сасса çаврăнса хорта юрлани халĕ те асрах. Унта чăваш ачисем хутшăннишĕн чун савăнчĕ, мăнаçлăх çуралчĕ. Чăннипех те маттурсем!

Владимир Путин та ача-пăча хорĕн ĕçне пысăк хак панă.

«Çак çамрăк йыш пуриншĕн те паллă, манăçми произведенисене халăх патне тĕлĕнмелле, чуна пырса тивмелле çитерме пултарнишĕн хам та питĕ тĕлĕнтĕм. Пĕр пин ачаран тăракан хор пĕр инструмент пек илтĕнет», – палăртнă Владимир Владимирович.

Сочирен таврăннă ачасен сăн-питĕнче йăл кулă çиçет, çамрăксенче вăй-хăват тапса тăни палăрать. «Шăпчăксем» Вадим Петровича асăнмалăх ушкăнпа çапăннă сăн ӳкерчĕк, Олимп символикиллĕ калем парнелерĕç, Александра Васильева ертсе пынипе Олимп юррин пĕр сыпăкне шăрантарчĕç. Вадим Ефимов çамрăк юрăçсене Культура министерствин тав çырăвĕсене пачĕ, çак çитĕнӳ çинче чарăнса тăмасăр малалла талпăнма, пысăк кăтартусем тума ăнăçу сунчĕ.

Çавăн пекех «Сочи – 2014» культура олимпиадине В.Воробьев ячĕллĕ ача-пăча музыка 2-мĕш шкулĕн вĕренекенĕ Полина Маркова та хутшăннă. Вăл Юрий Башмет ертсе пыракан Пĕтĕм Раççейри çамрăксен симфони оркестрĕнче юрланă.

**Елена АТАМАНОВА.**

КУРАВ

# Çуркунне шевли



Çак эрне пуçламăшĕнче ЧР Наци библиотекин литература уйрăмĕнче «Çуркунне шевли» ятпа кĕнекесен тата ал ĕç ăстисен япалисен куравĕ уçăлчĕ. Ăна çулталăкри чи хитре те илемлĕ вăхăта – çуркуннене – халалланă.

Çуркунне хитре, çепĕç тĕспе пуян. Çавна май çĕнĕ туйăмсем вăранаççĕ, чĕрере юрату çуралать. Ӳнерçĕсем те хитре пейзаж ӳкереççĕ, поэтсем пурнăçа юратма хистекен сăвăсем шăрçалаççĕ. Курава хутшăннă халăх пултарулăхĕн ăстисен ĕçĕсенче те çурхи кăмăл-туйăм палăрать. Капăр тумлă, тухьяллă пуканесем, вĕтĕ шăрçапа, хĕреслее тĕрленĕ ал тутрисем, минтер пичĕсем, çеккĕлпе çыхнă чĕресенчен ăсталанă кăшăл...

Кунта Римма Прокопьева, Любовь Фадеева, Алевтина Стеклова, Светлана Кошкина ал ăстисен тата Шупашкарти экономикăпа технологи колледжĕн вĕренекенĕсен ĕçĕсемпе паллашма пулать. Куравра çавăн пекех тĕрлеме, çыхма, каскалама, хăюран, кĕçĕрен, вĕтĕ шăрçаран тĕрлĕ хатĕр-хĕтĕр ăсталама, декорацие ал ĕç ӳнерĕн вăрттăнлăхĕсене хăнăхма вĕрентекен пин-пин кĕнекепе журнал пур.

**Елена МИШИНА.**



ХĔРАРĂМСЕН КАНАШĔ

# Сăпка сиктерекен алă тĕнчене тытса тăрать



**Нарăсăн 26-27-мĕшĕсенче Мускавра Раççейри Хĕрарăмсен канашĕн çулленхи конференцийĕ иртнĕ. Унта 72 регионтан килсе çитнĕ общество пĕрлешĕвĕсен председателĕсем, Федераци Канашĕн членĕсем, Патшалăх Думин депутачĕсем, вырăнти хăй тытăмлăх органĕсен, Пĕтĕм Раççейри халăх фрончĕн, «Пĕрлĕхлĕ Раççей» партин представителĕсем «Хĕрарăмсен канашĕ тата Ашшĕсен канашĕ çирĕп çемьешĕн, яваплă ашшĕ-амăшлăхшăн, хӳтлĕхлĕ ачалăхшăн» ыйту тавра калаçнă.**



Пĕлтĕрхи çакăн йышши мероприятире пирĕн республикăри Хĕрарăмсен канашĕн председателĕ Ольга Зайцева пухăннисене курăмлă материалпа тĕлĕнтернĕччĕ, «Чăваш Енĕн çирĕп аталанăвĕ» фильм кăтартнăччĕ. Çĕр-шывăн тĕп хулинче иртнĕ конференцие Ольга Юрьевна чăваш кĕпи тăхăнса хутшăннăччĕ ун чух. Çакна Раççейри хĕрарăмсен канашĕн ертӳçи Екатерина Лахова та ырланăччĕ, ыттисене те наци тумĕпе пыма сĕннĕччĕ. Кăçал та ентешсем хăйсене те, ĕçне те тивĕçлĕ шайра кăтартма пултарнă. Хальхинче Ольга Зайцева республикăри Хĕрарăмсен канашĕ çумĕнче йĕркеленнĕ Ашшĕсен канашĕн ертӳçипе, Шупашкар хулин депутатсен Пухăвĕн депутачĕпе Владимир Викторовпа пĕрле кайнă. Иккĕшĕ те вĕсем чăваш çи-пуçĕпе пынă. Владимир Николаевич Ашшĕсен канашĕн ĕçĕ-хĕлĕ пирки доклад, илемлĕ презентаци хатĕрленĕ. Унта вăл арканакан çемьесен ыйтăвне те çивĕч хускатнă.

«Статистика палăртнă тăрăх – 2011-2012 çулсенче кашни иккĕмĕш çемье арканнă. Сăлтавĕсене тĕпченĕ май эпир тĕрлĕ мероприяти ирттерсе хамăр ĕçе йĕркелеме шухăшларăмăр. Уйрăлассин пĕрремĕш сăлтавĕ – алкоголизмпа наркомани /41%/. Çакна тĕпе хурса Хĕрарăмсен канашĕпе пĕрле «Эпир – çемье урă йăли-йĕркишĕн» проект хута ятăмăр. Харпăр хăйĕн кĕтесĕ çукки /26%/ – иккĕмĕш вырăнта. Пурăнмалли çурт-йĕр программисене тăтăшах тишкеретпĕр, пирĕн патра вĕсем ăнăçлă ĕçлеççĕ. Тĕслĕхрен, «Çамрăк çемье» программăпа усă курса пĕлтĕр Шупашкар хулин Мускав районĕнчи 225 çемье пурăнмалли çурт-йĕр условийĕсене лайăхлатнă. Нумаях пулмасть «Студент çемйи» клубĕн черетлĕ ларăвĕнче çамрăксене кирлĕ информаципе паллаштартăмăр. Уйрăлакансен 14% ашшĕ-амăшĕ хушша-хуппа кĕнипе сăлтавлать. Ку çитменлĕхе пĕтермешкĕн эпир районсенчи ЗАГС уйрăмĕнче «Диалог» клуб уçма сĕнтĕмĕр. Ача çуратайманнипе те /8%/ çемье арканать. Çакна тĕпе хурса Президент перинаталь центрĕпе тата хĕрарăмсен кризис центрĕпе тачă çыхăнса ĕçлетпĕр. Уйрăлакансен 6% чылай вăхăт уйрăм пурăннă-мĕн. Çемьене тăрантармашкăн аякка çӳреме тивни те çемьене лайăх витĕм кӳмест. Çавăнпа та ĕçпе вырăнтах тивĕçтерме тăрăшмалла, биржăсем ирттерекен вакансисен ярмăркки ку тĕлĕшпе арçынсене пулăшма хатĕр. Тĕрмере ларакан мăшăрĕпе те пурăнасшăн мар хăшĕ-пĕри /2%/. Ирĕке тухакан хĕрарăмсене пулăшмашкăн «Эсĕ кирлĕ пире, тусăм!» проект хута ятăмăр. 1% мăшăрĕ чылай чирлесе пурăннишĕн уйрăлать. Пирĕн Республикăра Пациентсен канашĕ йĕркеленчĕ, ăна Ольга Зайцева ертсе пырать. Чăваш Ен Правительствин грантчĕсене «Пурнăçшăн», «Пĕрле сывлăха çирĕплететпĕр» проектсем тивĕçрĕç. Укçа-тенкĕпе усал шыçăпа чирлекенсен çемйине пулăшатпăр.

Статистика кăтартнă тăрăх – уйрăлас ыйтăва ытларах хĕрарăмсем хускатаççĕ, кăткăс ӳсĕм – 25-39 çул. Çак тапхăр – ача-пăча ӳстермелли вăхăт. Пĕчĕккисем мĕнле лару-тăрура çитĕнни пысăк пĕлтерĕшлĕ тесе шухăшлатпăр. Шупашкарти пĕр шкулăн социаллă паспортне тишкернĕ май çакна асăрхарăмăр – вĕренекенсен 21% кăна тулли çемьерен иккен, анчах шкул хыççăн пурнăçăн анлă çулĕ çине пурте тухаççĕ-çке. Хӳтĕлевçĕ, юлташ, упăшка, арăм, анне, атте сăнарĕсене мĕнлерех калăплĕç-ши вĕсем? Паллă ĕнтĕ, хĕр-упраç хăйĕн ашшĕне кура мăшăр суйлать. Сывăх çав çынни çук тăк камран вĕренмелле? Арçын воспитанине камăн та пулин урăххин хăйĕн çине илмелле. Пирĕн шухăшпа, ашшĕсен ырă тĕслĕхне сарма тăрăшмалла», – палăртнă Владимир Викторов.

Пĕлтĕр чӳк уйăхĕнчи слетра кашни ял тăрăхĕнче, хулари ача сачĕсенче, шкулсенче, пысăк предприятисенче ашшĕсен канашне йĕркелеме сĕннĕччĕ. Чăнах та, лав хускалчĕ темелле. 24 районта хастар арçынсем пĕр чăмăра пуçтарăнчĕç ĕнтĕ. Вĕсем кулленех тĕрлĕ ĕç пурнăçлаççĕ, çĕнĕлĕх те хута янă. Виртуаллă тĕнчере те «Ашшĕсен канашĕ» йĕркеленнĕ, интернет-форумра тĕрлĕ ыйту сӳтсе яваççĕ. «В Контакте» социаллă сетьре «Чăваш Ен ашшĕсем» ушкăн уçăлнă.

Ашшĕсен канашĕ «Çирĕп çемье – спортпа туслă çемье» девизпа ĕçлет. «Чăваш Ен «Спортпа чи туслă регион» ята илнинче Ашшĕсен канашĕн тӳпи те пурах, мĕншĕн тесен «Сывлăх сукмакĕ», «Çăлтăрпа пĕрле зарядка туни», «Тухтăрпа уçăлса çӳрени» проектсене арçынсем те хастар хутшăнаççĕ.

«Эпир çĕр çине хамăр хыççăн мĕнле те пулин йĕр, тăхăм хăвармашкăн килетпĕр. Апла тăк сăпка сиктерекен алă тĕнче тытса тăрать. Пĕрле хутшăнса ĕçлемешкĕн эпир яланах хатĕр. Пĕрле чылай ĕç тума пултаратпăр», – çапла вĕçленĕ вăл хăйĕн сăмахне. Чăвашсен опычĕ ыттисене те кăсăклантарнă, тăхтавра ĕçтешĕсем Владимир Викторова сырса илнĕ, сĕнӳ-канаш ыйтнă, шухăшкăмăлне пĕлтернĕ.

Ентешсем Мускавран пушă алăпа таврăнман, «Таса Кил, таса Çĕр-шыв, таса Планета» акцире çĕнтернĕшĕн Раççейри Хĕрарăмсен канашĕ чăвашсене дипломпа чысланă, хамăр Киле – Çĕр планетăна, тăван çут çанталăка, йăх-несĕл историпе культурин палăкĕсене – упрассишĕн тăрăшнăшăн тав тунă.

**Алина ИЗМАН.**

УЯВ УМĔН – ПĔТĔМЛЕТӲ

# Паянхи хĕрарăм: ĕмĕрĕ вăрăмрах, ăсĕ çивĕчрех

**Паянхи чиперуксем пĕрешкел мар паллах. Çапах та хăйне евĕрлĕхĕпе çут тĕнчене тытса тăма пултаракан тĕреве йĕркелеççĕ. Пĕлĕвĕпе, пултарулăхĕпе, ĕçченлĕхĕпе пурнăçăмăра илемлĕрех, пуянрах, хăтлăрах тума тăрăшаççĕ. Çав вăхăтрах вĕсем илĕртӳлĕхе, чун ăшшине, ырăлăха çухатмасăр юратнă амăшĕсем, шанчăклă мăшăрсем шутланаççĕ, тăван кил ăшшине упрама пĕлеççĕ. Шел, кашнийĕн ырă енне асăнса пĕтереймĕн. Пĕтĕмĕшле хаклава вара статистика çирĕплетет. Çакă пушă сăмах мар.**

Чăваш Ен халăхĕн 53 проценчĕ – хĕрарăм, вĕсен 62 проценчĕ хулара тĕпленнĕ. Вăтам ӳсĕмĕ 41,3 çулпа танлашать /хуларисен – 39,7, ялтисен – 43,9/.

Вăтам ĕмĕрĕ 76 çула тăсăлать, хуларисен /77/ кун-çулĕ ялтисенчен 2 çул вăрăмрах.

Хăш халăх çынни пулнине шута илес тĕк, чăвашсем уйрăмах йышлă – 67 процент, иккĕмĕш вырăнта – вырăссем /27/, виççĕмĕшсем – тутарсем /3/.

Вăй питти çултисем – чи йышли /54 процент/, ĕçлеме пултараслăх ӳсĕмне çитменнисен хисепĕ – чи сахалли /16/.

Статистика çирĕплетнĕ тăрăх – хĕрсем пĕрремĕш хут качча 25-ре тухаççĕ, иккĕмĕш хут çемье çавăракансем вăтамран 37-ре. Тĕпрен илсен вĕсен мăшăрлану ӳсĕмĕ 20-24 çулсемпе пĕр килет. Уйрăлакан хĕрарăмсен хушшинче хуларисем нумайрах.



Этемлĕхĕн черченкĕ çуррийĕ çут çанталăк умĕнчи тивĕçе пурнăçласа ача ытларах çуратма тĕв туни чăннипех савăнтарать: çураласлăхăн пĕтĕмĕшле коэффициенчĕ 2008 çулхи 1,5-рен 2012 çулта 1,8-ра çитнĕ. Пĕрремĕш пепкене кун çути парнелекенсен вăтам ӳсĕмĕ 25 çулпа танлашнă, иккĕмĕшсен – 29, виççĕмĕшсен – 33. 25-19 çултисем ача нумайрах çуратнă /ыйтса пĕлнисен 35 проценчĕ/.

Регистрациленĕ мăшăрланура тăманнисен ачисем сахалланнă: 2013 çулта çут тĕнчене килнисен йышĕнче – 20 процент /2008 çулта – 24/. Паспортра штамп ларттарни пирĕн хĕрарăмсемшĕн пĕлтерĕшлĕ пулни сисĕнет. Тивĕçлĕ мăшăр тупма пӳрменнисем вара хăйсене валли тесе пепкине хăрах çунат айĕнче пăхса ӳстермеллинчен шикленмесĕр ача çуратаççĕ. Пĕччен амăшĕсен 82 проценчĕн –1 ача, 16 проценчĕн – 2, 2 проценчĕн – 3 тата ытларах.

Вĕренӳ шайне илес тĕк, хĕрарăмсем арçынсене хăваласа çитрĕç кăна мар, иртсе те кайрĕç.15 çулти тата унран аслăрах ӳсĕмри 1000 хĕрарăмран 219-шĕ аслă пĕлӳ илнĕ, 42-шĕ – тулли мар аслă пĕлӳ, 300-шĕ – професси вăтам пĕлĕвне. Арçынсем тĕлĕшпе асăннă кăтартусем пĕчĕкрех: 172, 39 тата 268 çын.

Пултарулăха тата пĕлĕве кура хĕрарăмсем хăш тытăмра ытларах вăй хураççĕха? Статистика çирĕплетнĕ тăрăх – вĕсен экономикăри пуçарулăхĕ 62 процент шутланать. Çавсен 92 проценчĕ республика экономикин тĕрлĕ тытăмĕнче тăрăшать. Ĕçлекен 1000 çынран 944-шĕ – тара кĕрĕшнĕ, 56-шĕ бизнес йĕркеленĕ. Сывлăх сыхлавĕпе социаллă пулăшăва хĕрарăмсен тытăмĕ теме май пур, мĕншĕн тесен вĕсенче ĕçлекенсен 87 проценчĕ – этемлĕхĕн черченкĕ çуррийĕ.

Çапах та çамрăклăха тата пĕлĕве пăхмасăр хĕрарăмсене ĕç тупмашкăн çăмăл мар иккен. Пĕтĕм тĕнчери ĕç организацийĕн меслетлĕхĕпе килĕшӳллĕн иртнĕ çул 15,6 пин хĕрарăм /регистрациленисен 41 проценчĕ/ ĕççĕр шутланнă, вĕсен 59 проценчĕ аслă е професси вăтам пĕлĕвĕ илнĕ, 43 проценчĕ 30 çула çитмен.

Хальхи саманари хĕрарăмăн социаллă ыйтусен йывăр тиевне тӳсме, хăвăрт аталанакан пурнăça, патшалăхри тата обществăри пĕр вырăнта тăман ларутăрăва хăнăхма тивет. Çакă сывлăха витĕм кӳретех: пурнăçран уйрăлнă хĕрарăмсен 46 проценчĕн вилĕм сăлтавĕ юн çаврăнăш органĕсен чирĕпе çыхăннă.

Çапларах пулса тухрĕ паянхи хĕрарăм сăн-сăпачĕ. Вăл – Бальзак сăнланă ӳсĕмри чăваш. Яваплă, вĕреннĕскер, анчах ĕçе вырнаçас енĕпе йывăрлăха лекнĕскер. Вăл çемье хаклавне мала хурать. 25 çулта качча тухнă, çав ӳсĕмрех пĕрремĕш ачине /иккĕмĕшĕ е виççĕмĕшĕ те ытлашши пулмĕччĕ, анчах укçа-тенкĕ çитменни ура хурать/ кун çути парнеленĕ, мăшăрĕпе тата ывăлхĕрĕпе хулара тымар янă.

Çакна тĕпе хурса илĕртӳллĕ те çепĕç чунлă паянхи хĕрарăма çăмăл мар пурнăçра ырлăх-сывлăх тата ăнăçу сунатпăр. Шалăвăр пысăкрах пултăр сирĕн, упăшкăр сывă çӳретĕр, ытларах пурăнтăр. Ачăрсем савăнăç кӳччĕр.

Уяв ячĕпе сире!

**Валентина СМИРНОВА хатĕрленĕ.**





КОНКУРС

# Ăслăлăхри хĕрарăм сăнĕ

**/Вĕçĕ. Пуçламăшĕ 1-мĕш стр./.**

«Эпĕ асамçă мар, вĕренетĕп кăна...» номинацире Çĕрпӳри 2-мĕш вăтам шкул вĕренекенĕ Оксана Бардасова ыттисене хыçа хăварма хал çитернĕ. Радиоэлектроникăпа, физикăпа, математикăпа, компьютер техникипе кăсăкланаканскер нумай конкурсра хăйне кăтартма пултарнă. Жюри членĕсем шăпах çакна шута илнĕ те. Пуласлăхра космос технологийĕсем шухăшласа кăларасшăн вăл.

И.Н.Ульянов ячĕллĕ Чăваш патшалăх университечĕн медицина факультечĕн студенчĕ Елена Соленова каллех «Ăслăлăхри çамрăклăх» номинацире çĕнтерчĕ.

«Леди-çĕнĕлĕх» номинацире И.Я.Яковлев ячĕллĕ Чăваш патшалăх педагогика университечĕн химипе биосинтез кафедрин аспиранчĕ Анна Цыпленкова мала тухрĕ.

Экономика ăслăлăхĕсен кандидачĕ Елена Шерстюк «Ăслăлăхри амăшĕ» ят çĕнсе илчĕ. Унăн та ыттисемпе пĕрле сцена çине хăпармаллаччĕ çав кун. Шел, сывлăхĕ хавшанипе уява çитеймен вăл.

«Чи лайăх вĕрентӳçĕ» ята тивĕçнĕ Любовь Иванова Вăрнарти ял хуçалăх техникумĕнче ĕçлет. Ачасемпе пĕрле ăслăлăх фестивальне те хутшăннă вăл. «Манăн яланах çĕннине пĕлес килет. Çурма çулта чарăнма хăнăхман», – ăнлантарать Любовь Анатольевна. Сăмах май, техникумра вĕренекенсен ăслăлăх обществине йĕркеленĕ. Ăна вăл ертсе пырать. Тĕллевлĕ ĕçлекенсем нумай конкурсра палăрнă.

«Мĕн вăл общество?» – техникумра çак ыйту хуравне уçăмлатнă. Çакнашкал пĕтĕмлетӳ патне пырса тухнă вĕсем: вĕрентекенсемпе вĕренекенсемшĕн çынсем тата хутшăну нимрен пĕлтерĕшлĕ. Студентсемшĕн – укçа, педагогсемшĕн çемье иккĕмĕш вырăнта. Алла диплом илме хатĕрленекенсем юлашкинчен кăна ĕç тата хĕсмет пирки шухăшлани пăшăрхантарать Любовь Анатольевнăна. Çакна шута илсе техникум администрацийĕ валли сĕнӳ хатĕрлесшĕн хĕрарăм. «Ачасемпе ĕçлениех çамрăклатать мана», – унăн кăмăлĕ нихçанхинчен çĕкленӳллĕ. Унăн вĕренекенĕсем республика Пуçлăхĕн стипендине илсе тăраççĕ. Малашне те ачасемпе пĕрле çакнашкал конкурссене хутшăнма палăртнă вăл.

«Общество хисепĕ» номинацире МАДИ Атăлçи филиалĕн аспиранчĕ Галина Александрова палăрчĕ.

Кăçал тӳрех 3 ăсчах Гран-прие тивĕçрĕ. Ют чĕлхесен специалисчĕ Ирина Мартынова тĕрлĕ халăхăн культура хутшăнăвĕсене çырса кăтартнă.

Ольга Науменкăна /Чăваш патшалăх ял хуçалăх академийĕ/ микрохумлă кăмакана çĕнĕлĕх кĕртни çĕнтерме пулăшнă. Унпа чăкăт пĕçерме, сĕт юр-варне вĕрилентерсе микробсенчен тасатма пулать. Çак хатĕр пахалăхлă апат хатĕрлеме май панине çирĕплетекен документ та пур унăн. Унсăр пуçне вăл час пăсăлмасть. Апла тăк ăна Чăваш Енре кăна мар, республика тулашĕнче те сутма пулать. Ку çĕнĕлĕх электроэнергие перекетлеме пулăшать. Апат хатĕрлекеншĕн пиçсе каяс хăрушлăх çук.

Хăй вăхăтĕнче хулари сĕт заводĕнче ĕçлемен пулсассăн, тен, çак ĕçпе кăсăкланмĕччĕ те вăл. Ку çĕнĕлĕх ĕç калăпăшне те ӳстерет.

Шухăшланине пурнăçа кĕртмешкĕн пĕлтĕр 250 пин тенкĕ грант çĕнсе илнĕ Ольга Науменко. Кăçал татах çавăн чухлĕ укçа уйăрнă. Унпа çăнăхран пĕçернĕ çимĕçсен ассортиментне пуянлатмашкăн ятарлă хатĕр хута ярасшăн ăсчах.

Оксана Кондратьева /Чăваш патшалăх ял хуçалăх академийĕ/ сĕнекен им-çам хутăшĕсем тыр-пул тухăçне ӳстереççĕ. Вăл каланă тăрăх, акиччен вăрра азот е фосфор хушнă шĕвекпе пĕрĕхмелле. Çакă унăн шăтаслăхне ырă витĕм кӳрет.

Вĕренекенĕсенчен чылайăшĕ пурнăçне хăйсем суйланă ĕçпе çыхăнтарни савăнтарать ăна. Конкурс йĕркелӳçисене малалла аталанмашкăн çул уçнишĕн тав тăвать вăл.

Арçын ăсчахсен пĕрлĕхĕ йĕркеленменнишĕн пăшăрханса калаçакан та тупăнчĕ уявра. Кам пĕлет, тен, çитес вăхăтрах вĕсем те пĕр тытăма пуçтарăнĕç.

Çĕнтерӳçĕсене республикăри Хĕрарăмсен канашĕн ертӳçи Ольга Зайцева та саламларĕ. Ăсчахсен те вĕсен йышне кĕме вăхăт çитни çинчен каларĕ.

**Марина ГРИГОРЬЕВА.**

КĔСКЕН

# Вожатăй шкулĕ ĕçлет

Шупашкарти Çамрăксен пуçарулăх центрĕнче вожатăйсене хатĕрлекен центр уçăлчĕ. Аслă шкул, техникум-колледж студенчĕсем кунта икĕ уйăхлăх кĕске курссем иртĕç.

Центрта практика психологийĕ, педагогика урокĕсем йĕркелеме палăртнă, сывлăхпа кану лагерĕсенчи ачасемпе çул çитменнисен ĕç-хĕлне тĕрлĕ енлĕн йĕркелеме, лидер пахалăхне тата коммуникаци пĕлĕвне аталантарма, педагогикăри ятарлă технологисене ăша хывма вĕрентĕç. Кунта çамрăксене вĕренмелли нумай. Ĕçлесе курнă студентсем хăйсен ăсталăхĕпе паллаштарĕç, йăнăшĕсемпе çитменлĕхĕсем пирки те каласа кăтартĕç.

Уроксене хăйсен ĕçне лайăх пĕлекен, вожатăйра чылай çул ĕçленĕ педагогсем ирттереççĕ, Вĕсем «ăста вожатăй» вăрттăнлăхĕсене лайăх пĕлеççĕ.

Иртнĕ çул çак шкул витĕр 50 студент тухнă. Çамрăксен пуçарулăх центрĕнче вожатăй ăсталăхĕн шкулне кашни çулах йĕркелеççĕ. Раççей студенчĕсен отрячĕсен Чăваш Енри уйрăмĕ кăçал республикăри 3 пин ытла студента ĕçпе тивĕçтерме палăртнă.

**Елена БАШКИРОВА.**

# "Хыпар" çырăнăр – хыпарлă пулăр!

**Хисеплĕ тăвансем, чăвашсем! Халăхăмăрăн тĕп хаçачĕ – "Хыпар" – пĕр ĕмĕр ытла ĕнтĕ пирĕнпе юнашар пурнăç çаврăмне çăмхалать: Раççей, республика кун-çулне çутатать, мухтавлă çыннăмăрсемпе паллаштарать, культура анине илсе кĕрсе чун çимĕçĕпе сăйлать, чăвашлăха упраса та аталантарса пыма хăват парать. "Хыпарăн" пĕрремĕш редакторĕ Николай Васильевич Никольский калашле – хаçат ырра вĕрентет, пурнăçăн паха енĕсем патне çул уçать, ăнтăлма хистет.**

Ăнланатпăр: çанталăк ăшăтса пынăçемĕн ял çыннин ĕç нумайланать. Ая вут хунă пек чупкаласа çӳренĕ вăхăтра чун çимĕçĕпе туллин тивĕçтерекен "Хыпарсăр" тăрса ан юлăр. Пĕлетĕр: республикăри кашни почта уйрăмĕнче "Хыпар" Издательство çурчĕн кăларăмĕсене 2014 çулăн II çурринчен илсе тăмашкăн пуш /март/ уйăхĕн 31-мĕшĕччен малтанхи хаксемпе çырăнтараççĕ. Çак тапхăрта çырăнни çемье бюджетне перекетлеме май парать.

Чылай çын "Хыпара" çырăнмалли хак – 460 тенкĕ те 86 пус – пысăкраххине палăртать. Паллах, вăл пысăк мар, мĕншĕн тесен çур çулта 125 номер тухать. Кулленхи "Хыпара" çырăнса илме укçа-тенкĕ çитместех пулсан сире эпир **"Хыпар" – шăмат куна" суйласа илме сĕнетпĕр. Вăл чылай йӳнĕрех – 218 тенкĕ те 22 пус çеç.** 16 страницăпа, тĕрлĕ тĕспе пичетленекен кăларăмра сире кирли пĕтĕмпех пур: çĕнĕ хыпарсем, тĕплĕ тишкерӳсем, публицист шухăшĕсем, историе кĕрсе юлнă çынсемпе пулăмсем, паянхипе иртнĕ пурнăç, ятарлă страницăсем, Мускаври хаçатсем мĕн çырнисем, хуçалăхра кирлĕ сĕнӳ-канаш, гороскоп, эрнелĕх теле-, радио программăсем тата ытти те, тата ытти те.

Асра тытăр: "Хыпар" хаçатпа кам туслă, ăна вуласах тăрать – вăл пурнăçра та хăватлă, мал курăмлă.

ÇĔНĔ ТЕХНОЛОГИСЕМ

# Электромобиль рулĕ умне хăçан ларăпăр-ши?

«Шухăшланине пурнăçа кĕртсессĕн Нобель премине тивĕçĕн», – пахалаççĕ Михаил Ефимовăн ĕçне аслă шкул профессорĕсем. Хăйсен хаклавĕнче шăпах çапла çыраççĕ вĕсем. Ĕмĕтне çунатлантарма сĕнеççĕ. Анчах калама çăмăл – çĕнĕ япала туса кăлариччен çич хут тар кăларма тивет! Манăн та çак хатĕр çинчен тĕплĕнрех пĕлес килчĕ. Пирĕн пурнăçа мĕнле çĕнĕлĕх кĕртĕ вăл?

Михаил Федоровичăн аллинче – вун-вун патент. Вĕсен хушшинче çухалми токлă çыхăнусăр двигатель шухăшласа тупнине ĕнентерекенни те пур. Ăна пуçтарса кăна çитермелле. Хальлĕхе хăш-пĕр пайне хатĕрлеме ятарлă оборудовани, ăна туянмашкăн хулăн укçа кирлĕ. Эх, нухрат çителĕксĕрри ура хурать. Грант çĕнсе илес шанчăк пур паллах. Ăна та çанă тавăрса проект хатĕрлемесĕр тивĕçеймĕн. Унсăр пуçне республикăри заводсемпе те çыхăну йĕркелеме пулать. Унта пайсене чутласа кăлармалли оборудовани пур. Анчах саккас пама каллех укçа-тенкĕ шырамалла.



Михаил Ефимов студент чухнех çĕр çывăрмасăр тенĕ пек çĕнĕ йышши япаласен схемисене ӳкернĕ. Шухăш хăвачĕпе тантăшĕсене çеç мар, вĕрентекенсене те тыткăнланă. Ахальтен мар общежитири унăн пӳлĕмĕнчен халăх тухма пĕлмен. Вĕсем малашлăхри хатĕр-хĕтĕр çинчен калаçнă. Хăйне евĕрлĕ çак двигатель схемине те тахçанах чĕрме пуçланă вăл. Пĕрре мăшăрĕ килти çӳлĕксене пушатас тĕллевпе чылайранпа тытман хутсен тĕркине çӳп-çап контейнерне кайса пăрахнă. Юрать-ха тиесе кайма ĕлкĕреймен, унсăрăн темиçе çул тăрăшни харама каятчĕ. Кил хуçи схемăсене каялла пуçтарса кĕртнĕ те çĕнĕ вăйпа ĕçе пуçăннă.

Шупашкарта иртнĕ Russian StartUp Tour роуд-шоура Михаил Федоровичăн пулăшуçи Дмитрий Алюнов шăпах çак проектпа паллаштарнăччĕ. Ку двигателе электромобиле вырнаçтарма сĕннĕччĕ вăл. Кам пĕлет, тен, пуласлăхра çакнашкал машина кăларакан заводсем çĕнĕ хатĕрпе усă курма пуçлĕç. Проект авторĕсем каланă тăрăх – унăн двигательне улăштарма вăхăт çитнĕ. Шел те, ун чухне укçа уйăрасси пирки каламарĕç пĕр хуларан теприне çитекен хăнасем.

Бензин хакланса пырать. Халăх электромобиль рулĕ умне куçса ларасса систермест-ши çакă? «Пирĕн двигателе лартсассăн 2020 çулчченех республикăна çакнашкал машинăсем çитĕç. Çук-тăк – 2030 çулччен кĕтме тивĕ», – ăнлантарать Михаил Федорович.

Пысăк хăватлă, çав вăхăтрах пĕчĕк калăпăшлă двигатель чăннипех те питĕ пысăк пĕлтерĕшлĕ. Электромобиль тавра сăмах пуçартăм та, анчах ку двигательпе дрельтен пуçласа ГЭС таранччен усă курма май пур. Вăл хĕм кăлармасть. Çĕнĕ йышши двигателе взрыв тĕлĕшĕнчен хăрушă вырăнта та, нӳрĕ çĕрте те, сывлăшсăр тавралăхра та ĕçлеттерме май пур.

Хальлĕхе çак хатĕрĕн 2/3-мĕш пайне тĕрĕслев витĕр кăларнă. Ĕçе пуçăннисем вăл ăнăçлă пулса тухасса ĕненеççĕ.

**Марина ТУМАЛАНОВА.**
**Автор сăн ӳкерчĕкĕ.**





## АПАЧĔ ТУТЛĂ ПУЛТĂР



### Купăстапа апельсин салачĕ

**500 грамм купăста, 1 апельсин, 1 хăяр, консервланă 1 банка çу çырли, тип çу, 1 лимон сĕткенĕ, тăвар, тип çу кирлĕ.**

Купăстана вĕттĕн турамалла, тăварпа лимон сĕткенĕ хушса алăпа çемçетмелле. Апельсинпа хăяра – тăваткалласа, çу çырлине çурмалла касмалла. Çимĕçсене тип çупа пăтратмалла.

### Шалча пăрçи катлечĕ

**Пĕçернĕ 2 стакан шалча пăрçи, 1 кишĕр, пуçлă 1 сухан, 5-6 апат кашăкĕ çăнăх, тăвар, пăрăç, тип çу, вĕтетнĕ сухари кирлĕ.**

Шалча пăрçине аш арманĕ витĕр кăлармалла. Сухана вĕттĕн турамалла, кишĕре теркăламалла. Çимĕçсене тăварпа, пăрăçпа, çăнăхпа пăтратмалла. Çак хутăшран катлет тумалла. Кашнине сухарипе йăваламалла, ылтăн тĕс çапиччен тип çупа ăшаламалла.

### Пылак плов

**300 грамм рис, 100 грамм иçĕм, 100 грамм курага, 100 грамм хура слива, 2 апат кашăкĕ сахăр, тип çу кирлĕ.**

Риса пĕçермелле. Курагапа хура сливăна 4-6 пая касмалла. Улма-çырлана сахăрпа ăшаламалла. 5-7 минутран рис хушмалла. Пылак плова пăтратма манмалла мар. Тепĕр 5 минутран çулăма сÿнтермелле.

### Печени

**2 апельсин, 2 апат кашăкĕ тип çу, 100 грамм пыл, 2 стакан çăнăх, 1 чей кашăкĕ апат соди, тăвар кирлĕ.**

Апельсинсене 3-5 минутлăха вĕрекен шыва ямалла. Çакă хуппинчи йÿççе туртса илет. Хуппипе пĕрле каснă апельсина блендерпа пăтратмалла, пылпа тăвар хушмалла. Апельсин нимĕрне кастрюле ямалла, çăнăхпа, апат содипе пăтратмалла. Чустана йĕтĕрлемелле, печени касса кăлармалла, духовкăра 15 минут пĕçермелле.

### Типĕтнĕ улма-çырлапа мăйăр канфечĕ

**17 мăйăр, 70 грамм курага, 70 грамм хура слива, 50 грамм иçĕм çырли кирлĕ.**

Типĕтнĕ улма-çырлана ăшă шывра шÿтермелле. Унтан сăрăхтарса аш арманĕпе авăртмалла. 7 мăйăра блендерпа вĕтетмелле. Юлнине улма-çырла хутăшĕнче йăваламалла, çиелтен вĕтетнĕ мăйăр сапмалла.

### Шăккалатри хура слива

**10 хура слива, 50 грамм аçтăрхан мăйăрĕ, çур лимон, 1 апат кашăкĕ пыл, 100 грамм шăккалат, 40 грамм иçĕм кирлĕ.**

Хура сливăна ăшă шывра шÿтермелле. Аçтăрхан мăйăрне, лимон сĕткенĕпе хуппине, иçĕме, пыла блендерта пăтратмалла. Çак хутăша хура сливăна тултармалла. Кашни канфета ирĕлтернĕ шăккалата чиксе кăлармалла.

### Пĕремĕк торчĕ

**500 грамм пĕремĕк, 500 грамм хăйма, 150 грамм сахăр, консервланă 1 банка ананас, аçтăрхан мăйăрĕ, теркăланă шăккалат кирлĕ**

Пĕремĕке икĕ пая уйăрмалла. Хăймана сахăрпа пăтратмалла. Çак хутăшра йĕпетнĕ пĕремĕке турилккене хумалла. Ун çине вĕтетнĕ ананас сармалла. Пĕремĕкпе ананаса черетлесе хăпартмалла. Çиелтен хăйма ямалла. Торта 1 сехетлĕхе сивĕтмĕше лартмалла. Хăйма сивĕнсен теркăланă шăккалат, вĕтетнĕ мăйăр сапмалла.

## ТĔН

# Типĕ тытакана

**Çулталăкри чи вăрăм та çирĕп типĕ вăхăчĕ кăçал пушăн 3-мĕшĕнчен пуçланчĕ. Вăл 48 кун, 7 эрне, пырать. Турра ĕненекенсен чи пысăк уявĕнче – Мăн кунра, акан 20-мĕшĕнче – вĕçленет.**

Мĕншĕн çынсем типĕ тытаççĕ-ха? Хăш-пĕр çимĕçе ăша ямалла тăхтаса чун тасалăхне нишлĕ туйăмсенчен мала хума, усал шухăшран хăтăлса кăмăл-сипет тĕлĕшĕнчен çĕнелме тăрăшаççĕ.

Православи чиркĕвĕн канонĕсем тăрăх – типĕ тăршшĕпех тунти кун, юн кун тата эрне кун чĕрĕ ÿсен-тăран çимĕçне пĕр хутчен, каçхине, çимелле. Ытлари кунпа кĕçнерни кун – çусăр вĕри апат. Шăмат кунпа вырсарни кун – ÿсен-тăран çăвĕпе усă курма юрать. Типĕре какай, сĕт юр-варĕ пирки манмалла.

Пысăк уявсенче – акан 7-мĕшĕнче, Турă Амăшĕ ырă хыпар пĕлнĕ кун тата Иисус Христос Иерусалима кĕнĕ кун – акан 13-мĕшĕнче, пулă çиеççĕ. Аслă типĕн юлашки эрне кунĕнче ăша нимĕн те ямаççĕ. Хăшĕ-пĕри шăмат кун та, Мăн кун çитиччен, çиме тăхтать. Чиркÿ ĕçченĕсем Аслă типĕ йĕркине çирĕп пăхăнаççĕ пулсан ахаль çынсене кунне 4-5 хутчен пĕчĕкшерĕн апатланма юрать. Чирлекене, ача амăш пулма хатĕрленекене, кăкăр ĕмĕртекен хĕрарăма, хул-çурăм вăйĕпе куллен ĕçлекене типĕ тытма сĕнмеççĕ.

Сывлăха сиен кÿрес мар тесен мĕн çимелле-ха?

Пахча çимĕçпе улма-çырла тĕп апатсенчен пĕри шутланать. Килти хуçалăхра лайăх упраннипе усă курма тăрăшмалла, лавккара иккĕленÿллĕ ĕçме-çиме чылай. Кишĕр, çĕр улми, хĕрлĕ кăшман, чĕрĕ тата тăварланă купăста, хăяр, çулла хатĕрленĕ ытти çимĕç типĕ сĕтелне тулăхлатĕç. Çавăн пекех кукурузпа пăрçа, пылак пăрăç, пан улми, гранат, цитрус пирки ан манăр. Апат хатĕрленĕ чухне шута илĕр – техĕмлĕхпе, тăварпа, сахăрпа май пур таран сахалрах усă курмалла, çавăн пекех çупа ăшалас вырăнне пăс е гриль çинче хатĕрлеме сĕнеççĕ. Витаминпа ытларах упранса юлтăр тесен пахча çимĕçе вĕрекен шыва ямалла, вĕреме кĕриччен çулăма вăйлатмалла.

Пăтă та типĕ вăхăтĕнче тĕп вырăн йышăнать. Ăна шывра, сĕтпе çу хушмасăр, пĕçермелле. Тутлăрах та тĕрлĕрен пултăр тесен кĕрпепе пĕрле кăмпа, кишĕр, сухан, мăйăр хушăр.



Типĕтнĕ улма-çырлапа е пылпа пăтă десерт вырăннех пулĕ.

Вылăх-чĕрлĕх çимĕçĕнчи белока ÿсен-тăранрипе улăштарсан организм та çырлахать. Баклажан, арахис, ясмăк, соя, пăрçа йышшинчи ытти культурăра та нумай вăл.

## СЫВЛĂХ

# Иммун тытăмне çирĕплетме

Пĕрешкел виçепе курага, пыл, услам çу, грек мăйăрĕ, иçĕм, лимон тата алоэ сĕткенĕ илĕр. Улма-çырлапа мăйăра аш арманĕпе авăртăр. Çемçе услам çăва кагорпа, пылпа, алоэ сĕткенĕпе хутăштарăр. Лимона вĕри шывра икĕ минут тытнă хыççăн сĕткенне кăларса пылпа çу хутăшне ямалла, лайăх пăтратмалла. «Эмеле» сивĕтмĕшре упрамалла, кунне икĕ-виçĕ хут пĕр чей кашăкĕ ĕçмелле. Сиплĕ хутăша ачасене те пама юрать.

# Ура ывăнсан

Çывăрас умĕн урана çумалла та 1 лимон сĕткенĕ хушнă шывра йĕпетнĕ пир нуски тăхăнмалла. Çиелтен – типĕ ăшă нуски. Çаплах çывăрмалла. Ирхине ура ыратмĕ, ывăнни те иртсе кайĕ.



# Сыпă ыратнинчен

50 грамм камфора, 50 грамм горчица порошокĕ, 50 миллилитр спирт тата 3 çăмарта шурри илĕр.

Спиртра малтан камфора, кайран горчица ирĕлтермелле. Тепĕр савăтра çăмарта шуррисене лăкамалла. Икĕ хутăша пĕрлештермелле. Çак маçе ыратакан вырăна сĕрĕр, çăм тутăрпа çыхса çывăрма выртăр. Çапла 10-15 кун сипленмелле. Ыратни иртмесен 3 кунран тепĕр сиплев курсĕ пуçлăр. Маçе сивĕтмĕшре упрăр.

# Стоматитран

1 апат кашăкĕ лимон сĕткенне 1 стакан шывпа, 1 апат кашăкĕ пылпа хутăштарса çăвара чÿхĕр.

## ПАХЧАÇĂ КĔТЕСĔ

# Йывăç касмалли тапхăр

Йывăç-тĕме касмалли чи ăнăçлă вăхăт – хĕл вĕçĕ, кăчкă сарăлма пуçличченхи тапхăр. Анчах та асăрханулă пулмалла. Пĕлтĕрхи туратсем çинчи кăчкăсенчен çирĕп хунавсем тухаççĕ. Çавăнпа вĕсене тĕкĕнмелле мар. Чи малтан типнĕ, хуçăлнă туратсенчен хăтăлăр. Каснă вырăнсем турпасланса ан юлччăр. Çиййĕнчех сăмалапа сĕрĕр.

Вăйсăр ÿсен-тăрана шеллеме кирлĕ мар – тымар патĕнчех татăр, аталаннине вара – çиелтен. Тĕм-йывăç каснă хыççăн çеç лайăх ÿсме пуçлать.

## КАЙĂК-КĔШĔК

# Мĕн çитермелле-ши?



**Чăхсем çăмарта сахал тăваççĕ. Мĕн çитермелле-ши? Мĕнле витаминсем туянмалла?**

**Венера.**

Апата витаминсем тата минераллă япаласем хушсан чăннипех те чăхсем çăмарта тăвасси ÿсет.

Уйрăмах « Гувитан», «Здравур Несушка», «Крепковит», «Фосренил», «Ксибетенцел» препаратсене ырлаççĕ.

Çуллахи вăхăтра чĕрĕ вĕлтĕрен тураса пани те аван.

## КАЛА-ХА, ТĔЛĔКĔМ

**Юратнă çынпа тĕттĕм çĕрте чуп туни** – усал сăмах çÿретме сăлтав тупăнасса,

**çутă çĕрте чуп туни** – хăвăра йĕркеллĕ тытатăр, сирĕн хутшăнусене никам та сÿтсе явмĕ,

**юратнă каччă теприне качча илнине курсан** – кĕвĕçÿпе чуна ыраттарасса,

**мăшăра юратни** – çемьешĕн хăрушлăх çук, ачасем сире савăнтарĕç,

**урăх арçынпа савăшни** – ултава,

**юратнă çынпа апат çини** – вăрçасса, уйрăласса, **енчен те апат килĕшрĕ тĕк** – хутшăнусемшĕн нимĕн те хăрушă мар,

**савнипе сыв пуллашни** – юратнă çын сивĕнессе,

**савнирен хитре те хаклă парне илни** – пуян та лайăх упăшка тупасса,

**савнин сăн ÿкерчĕкне пăхни** – тунсăха, мăшăр хушшинче ăнланулăх çухаласса,

**савни пăрахса кайни** – уйрăласса е юратнă çынна çухатасран хăрасса,

**кăвак куçлă арçын** – тĕл пулăва, юратăва,

**ĕмĕтри арçын лаша утланни** кăсăклă паллашăва пĕлтерет.

**Вăрçă** – кампа та пулин хирĕçессе,

**вăрçа хутшăнни** – хăрушлăха хирĕç тăрасса,



**вăрçăран тарни, пытанни** – çын кулли пуласса, кам та пулин тапăнасса,

**вăрçă час-часах курни** – сирĕн ĕçсем начаррине, çемьери йывăр лару-тăрăва, килçуртри тирпейсĕрлĕхе,

**каччине вăрçа ăсатнине хĕр курсан** – савнин япăх енĕсене асăрхасса,

**çĕнтерÿ** – çемьере кĕçех çураçу хуçаланасса, ĕçре те ăнăçу килессе;

**çар çынни** – çывăх çыншăн хытă кулянасса,

**çар çыннипе калаçни** – сирĕн тавра йăпăлти чылай,

**çар хĕсметне чĕнни** – пуçлăх кÿрентерессе, çывăх вăхăтра ертÿçĕпе хирĕçесрен сыхланмалла,

**çар çыннине хĕрарăм курсан** – сире килĕштерекен арçын чылай,

**çар çыннине арçын курсан** чылай тăрăшнă хыççăн унăн ĕçне тивĕçлипе хакласса пĕлтерет.

**Йĕп курни** – тем те пĕр каласа кÿрентерессе, вăрттăн тавăрасса, тухатласса, юнлă йĕп тăван усал тăвасса систерет,

**йĕп тупни** – тавлашасса,

**йĕп парнелени** – туспа уйрăласса.




ШĂПА

# Шанчăка çухатмастăп

20 тултарсанах мана хамăр касри Алюш çураçасшăнччĕ. Яхăнне те ямарăм, ялтан хулана тухса тартăм. Клубран пĕр-ик каç ăсатсаланипех качча тухса лармаллаччĕ-и-ха манăн? Уйăх çурăран таврăнтăм та яла – хайхи-майхи Алюш авланать! Кӳршĕ ял хĕрне клубра курнă та качча тухма ыйтнă, лешĕ хирĕçлемен. Туя кайса саламларăм тусăма. Аван марланнă пек пулчĕ ман умра Алюш.

Хулара тепĕр каччă пуçа çавăрттарма пуçларĕ. Ĕçрен кĕтсе илет, ăсатса ярать. Маншăн нимĕн те шеллемест, мĕн каланине йăлтах итлет. Кӳренме пĕлмест, пĕрмай шӳтлет. Анчах та... Ытла та пĕчĕкчĕ Сашук. Хам çӳллĕш кăна. Яла кайсан тус-тантăш кулĕ терĕм, сивĕтрĕм савнине. Кайран та килсе çӳрерĕ, пĕрле пулма ӳкĕтлерĕ. Çавăраймарĕ.

Пĕррехинче тантăшăм хăйсен ялне хăнана чĕнчĕ. Мĕнех, килĕшрĕм. Çĕнĕ çул кĕтсе илме ун патне вĕçтертĕм. Клубра çӳллĕ, хитре каччă вальс ташлама кăларчĕ. Пĕр-пĕрне пĕрре курсах килĕштертĕмĕр. Хулара та пырса çӳреме пуçларĕ хайхискер. Хĕрсем те куç илми сăнатчĕç ăна. Пурин кăмăлне те каятчĕ ман савни. Анчах та нихăçан та кучченеçпе кĕрсе курман Çеруш. Пĕрмаях хамăр хăналаса яраттăмăр. Ытлашши тăкакланма юратманран кинона та чĕнместчĕ. Паркра кăна уçăлса çӳреттĕмĕр, Атăл хĕрне анкалаттăмăр. Час-часах килсе çӳреместчĕ вăл. Е вăхăт çук, е тата амăшĕ чирленĕ... Тĕрлĕ сăлтав тупатчĕ. Пĕррехинче тантăшăмпа пасара кайма тухрăмăр. Ман Çеруш урăх хĕрпе çавăтăнса утать! Курмăш пулса иртрĕ. Куçĕнчен шăтарасла пăхрăм, анчах нимĕн те чĕнмерĕм.

Ялта та темиçе хĕр пуçне çавăрттарнине илтрĕм кайран. Урăх килмерĕ Çеруш. Ир те, каç та кĕтеттĕм ăна. Килĕшетчĕ вăл мана, çавăншăнах каçарма та хатĕрччĕ.

Майĕпен çулсем те иртрĕç. Пĕрле вĕреннисем качча тухса, авланса çемье çавăрчĕç. Хамăр касри Алюш та алă çавăрса ячĕ. Кермен пек çурт хăпартса лартрĕ. Ялта пекарня уçрĕ. Мăшăрĕ те чечекрен кая мар. Хĕр те, ывăл та пур. Ахалех тиркерĕм ăна. Алюшран лайăххахи, хитререххи çук та халь.

Хĕрĕх урлă та каçрăм. Эпĕ паянхи кун та пĕччен. Халь манпа паллашакан та сахал. Арăмĕсенчен уйрăлнă ĕçкĕçсем кăна çыпăçкалаççĕ. Е кама та пулин вăхăт ирттерме кирлĕ. Пĕччен пулнăран темшĕн çăмăлттай хĕрарăм вырăнне хураççĕ мана.

Арçынпа çавăтăнса утакансене курсан чун ыратать. Мĕншĕн телейсĕрши эпĕ? Кайăксем те мăшăрлă, эпĕ вара пĕччен. Ĕçрен киле, килтен ĕçе... Кашни кунах çапла. Телевизор куратăп та выртса çывăратăп. Тепĕр чухне ыйхă та килмест. Пĕр çыншăн апат та пĕçерместĕп. Ватăлатăп пулмалла, хитре тумтир те илĕртми пулчĕ. Тантăшăмсен хăйсен пурнăçĕ. Манпа кичем вĕсене. Ĕç хыççăн хăвăртрах ача садне чупмалла, урок тумалла. Тĕссĕр пурнăç йăлăхтарчĕ. Анне те чунтан хĕрхенет мана. «Карчăка çаврăнатăн вĕт, хĕрĕм», – тесе йĕрет. Хăть çамрăкрах чухне ача та çуратман. Унпа йăпанса пурăнăттăм. Ĕçре те никампа хутшăнас килмест. Пурте упăшка, ача пирки калаçаççĕ. Эпĕ кăна шыв сыпнă пек ларатăп.

Уявра та саламлакан çук мана. Арăм мар, анне мар эпĕ. Çамрăк чухне каччăсене мĕншĕн тиркенĕ-ши? Халь хам никама та кирлĕ мар. Качча каймасăрах ватăлатăп. Пĕччен хĕрарăма шăши те хӳрипе çапса кӳрентерет теççĕ те, тĕрĕсех иккен. Çамрăк чухне çакăн пĕлтерĕшне те ăнланман. Ĕçри хĕрарăмсемпе кӳршĕ карчăкĕсем хам хыçра пăшăл пăтти пĕçернине те сисетĕп. «Ват хĕр» вĕсемшĕн эпĕ. Кĕçех ятăма та манса кайĕç.

Çуркунне те çитрĕ. Манăн та кама та пулин савас килет. Йĕркеллĕ, ĕçмен арçынпа паллашса пурнăç тăвасчĕ. Пĕчĕк арçынсене те ĕлĕкхи пек тиркеместĕп. Тĕкĕртен пăхатăп та хам çине, хальлĕхе аптрамастăп-ха. Сăнсăр мар, кĕлеткем те писĕ. Ватлăхра юрату шырать тесе ан кулăр. Манăн та телейлĕ пулса курас килет. Тен, Турă çырни тупăнĕ. Шанчăка çухатас килмест-ха.

**Галина.**
Шупашкар хули.

АХ, АНЧАХ...

# Хăнасем

Тарьен икĕ хĕрĕ те çемйисемпех Мускавра пурăнать. Çавăнта ĕçлесех Шупашкарта хваттер те илчĕç, çăмăл машина та туянчĕç. Тăван тăрăхалла таврăнма кăна шухăшламарĕç. Амăшĕ патне шăнкăравласах тăраççĕ-ха ачисем. Анчах Тарьен вĕсенчен пулăшу курас килет-çке. Уйрăмах çулла пĕччен йывăр килет ăна. Утă кĕртме те, кĕтӳ çӳреме те çынна куçран пăхмалла. Укçа тӳлесен кӳршĕ урамри Леньăсен ачисем пулăшма килĕшеççĕ-ха.

Отпуск вăхăтĕнче те пĕр эрнерен ытла пурăнмаççĕ ачисем ялта. Вĕсене чаплă хăнасене пăхнă пекех сăйлать амăшĕ. Кунсерен кукăль-çăмах янтăлать. «Çăнăхран пĕçернĕ çимĕç мăнтăрлатать, анне», – тиркешрĕç çинçе пилĕклĕскерсем. Офисран кун каçипе те тухса курмаççĕ иккен вĕсем, кунта вара кăмăла ирĕке ярса хĕвел айĕнче хĕртĕнесшĕн, шĕлепке тăхăнаççĕ те пахчана тухса выртаççĕ. «Çум çумланă е утă пуçтарнă хушăра та писĕхме пулать...» – шӳтле-шӳтлех кĕрепле-кĕреçе пырса тыттарать Тарье.

Иртнĕ çулла кинемей çĕнĕ мунча лартасшăнччĕ, пӳрте шыв кĕртесшĕнччĕ. Пенсиренех пĕчĕкшерĕн нухрат пухса пычĕ. «Халĕ ку ĕçпе аппаланма вăхăт çук, анне. Ачана вĕрентме кĕртмелле, укçа-тенкĕ енчен те пулăшаймастпăр», – терĕç. Çемйипех ют çĕр-шывра канма иленнĕ те, кашни çулах тĕрлĕ çĕре çитеççĕ. Путевка илсе хунă тесе йăпăр-йăпăр пуçтарăнчĕç те ялтан тухса кайрĕç...

Кинемей чунĕ хурланчĕ, чылайччен лăпланаймарĕ. «Хамăр та атте-аннене пулăшса тăраймарăмăр çав, ачасенчен мĕн кĕтес ĕнтĕ? Питĕ аякка качча килтĕм те хăнана та хутран-ситрен кăна çӳреттĕм. Хамăр пӳрт çĕклеме тытăнтăмăр, ачасене çитĕнтертĕмĕр...» – кӳршипе Шурккăпа чылайччен калаçса ларчĕç вĕсем аншарли кĕленчине пушатнă май. Хĕрĕсене хурламарĕ вăл, тусĕ умĕнче вĕсемпе мухтанчĕ кăна. Çылăхĕ пур-ха Тарьен – черкке пушатсан 2-3 кунсăр та уйăлаймасть. Çывăрса каять те кĕтӳ кĕртнине те сиссе юлаймасть. Çавăн чухне Шуркка кинĕ унăн выльăхĕсене кĕртсе ярать, ĕнине те вăлах сăвать. Ĕçкелесен Тарье телефона сӳнтерсе хурать, мĕншĕн тесен ачисем шăнкăравласа халтан яраççĕ. Амăшĕ ӳсĕррине сасăранах пĕлеççĕ çав. Тытăнаççĕ вара ватă çынна пурнăçа вĕрентме. Çавсемпе ятлаçасшăн мар кинемей. Урăлса çитсен Тарье хăйне шутсăр тарăхать, пуçĕ ыратни иртсе кайсанах пуçтарăнса кайнă мĕн-пур ĕçе майлаштарать.

Пуш уйăхĕн 8-мĕшне паллă тума тесе Тарье патне Шуркка пулăштух чиксе каçрĕ. Тăварланă хăярпа купăста, писнĕ çĕр улми кăларса хучĕç – уяв кĕреки тулчĕ те. Пĕр-ик черкке пушатнă хыççăн юрра ячĕç. Урамра сивĕччĕ те йĕкĕреш путеке Тарье пӳрте кĕртнĕччĕ. Юрланă сасăпа вĕсем те вăранчĕç, йăмра çулçи кăчăртаттарма пикенчĕç...

Икĕ кинемей кил умне çăмăл машина пырса чарăннине те асăрхаман. Сасартăк алăк уçăлчĕ те Тарьен хĕрĕсемпе кĕрӳшĕ, мăнукĕ кĕрсе тăчĕç. «Фу-у, тем шăрши кунта...» – кĕнĕ-кĕмен тутине пăркаларĕ тахăшĕ кĕрекере ларакансене сывлăх суннă май. «Ачасем килчĕç-и-иç! Мĕн тери савăнăç!» – хыпаланчĕ Тарье. «Анне, эсĕ каллех ĕçсе лартнă, уяв тĕлне урай та çуман», – персе ячĕ асли. «Кинĕм мана урай кăна мар, йĕм те çутармасть», – тусĕн хутне кĕчĕ Шуркка. «Эпĕ хамах, хамах... Иртĕр, ачасем. Яшка та пурччĕ унта», – хăнасем тавра чупкаларĕ Тарье. Систермесĕрех пырса кĕчĕç те çав... Чăнах та, кил-тĕрĕшре тирпейлесе тухма ал çитеймерĕ, путексем те çӳпĕлесех тăраççĕ, паян кăна сăмакун юхтарнăччĕ те çав шăршă та сӳрĕлсе пĕтеймен ĕнтĕ. Тирпейлĕ çынсене çакă та кӳлештерет пулĕ. Е амăшĕ ĕçнĕшĕн тарăхрĕç-ши?

Юрать-ха кĕрӳшĕ шӳтлеме ăста. «Çĕр çинчи чи лайăх хунямана никама та кӳрентерме ирĕк памастăп, мĕн пур ĕçе паян йăлтах хам çине илетĕп», – текелесе хĕрлĕ кĕл чечек çыххи тыттарчĕ. Мускав кучченеçĕсем те сĕтел çине тухса выртрĕç.

Кӳршĕ хĕрарăмĕ киле кайма тапранчĕ. «Ан кай, Шура аппа, пĕрле ларар. Сана валли те парне илсе килтĕмĕр, кине те пырсах тав тăвасшăнччĕ. Аннене пулăшнăшăн, пăрахманшăн...» – сумккăран хитре халат туртса кăларчĕ.

Тарьен хăнисем виççĕмĕш кун тухса кайрĕç, çулла килме шантарчĕç. Вĕсем мунча кĕресшĕнччĕ те, ачисен кăмăлне тивĕçтерейменшĕн кинемей хытă кулянчĕ: кăмаки çурăлса кайнă, хутма май çук. Шуркксем чĕнчĕç-ха, анчах çын патне пыма именчĕç-ши? «Кăçал хамăрах çĕнни, икĕ хутли, туса лартăпăр», – çапла калаçса таталчĕç ачисем амăшĕпе сыв пуллашнă май.

**Алина ИÇĔМПИ.**

КУН ПЕК ТЕ ПУЛАТЬ

# Патша майри пекех

Упăшкан ĕçĕнче пур уява та вăхăтра паллă тăваççĕ. Хальхинче мăшăр мана та хăйĕнпе пĕрле илсе каясшăн. Организаци пуçлăхĕ хушнă тет. Ăна итлес пулать. Малтан эпĕ ачасене никампа хăвараймanran килтен тухса курман, пĕр уява та хутшăнман. Çавăнпах унăн ĕçтешĕсем çинчен нимех те пĕлместĕп. Тепĕр тесен, манăн та йышпа савăнас килет.

«Йĕркеллĕ пĕр кĕпе те çук санăн», – шкапри тумтире тытса пăхнă май мăкăртатать упăшка. Хакли хитре-ха та, анчах ăна илме укçа шелленĕ. Йӳнĕ япалапа арçынна юрама йывăртарах. «Чи малтанах шашкă кĕрĕкĕ илес пулать. Ĕçтешсен арăмĕсем хаклă çи-пуç анчах тăхăнаççĕ. Эсĕ тĕссĕрленнĕ курткуна уртса ярăн-и?» – çаплипех кăмăлсăр калаçать вăл. Эпĕ хирĕç мар-ха, анчах ун чухлĕ укçа çук пирĕн. Çакна мăшăрăм хăй те пĕлет. «Ăçта ĕçлеççĕ вара вĕсем?» – савăт-сапа çунă май хытах калаçатăп унпа. «Ачи-пăчи – шкулта, садикре, хăйсем килте лараççĕ. Кунĕпе телевизор пăхаççĕ е Интернет усăлхне йĕрлеççĕ», – ăнлантарать упăшка. Юлташĕсем каласа кăтартнă ĕнтĕ ăна. Ун пек арçынсене хĕрарăмсен хисеплемелле. Ара, юратнă арăмĕсене алă çинче йăтса çӳренипе танах ку.

Упăшкапа иксĕмĕр кĕрĕк сутакан лавккана çитсе кĕтĕмĕр. Те çирĕм, те вăтăр кĕрĕк тăхăнса пăхрăм çав




кун. Килĕшекеннине аранах шыраса тупрăмăр. Пĕччен пулсан шурă вăрăм кĕрĕк илес çукчĕ. Хăвăрт вараланать вĕт вăл. Кайран мĕнле тасатмалла ăна? Çитменнине тата çав укçапа тĕнче курса килме пулать вĕт. Мăшăр нумай шухăшласа пуçне çĕмĕрерĕ, хаклă япалана кайран тӳлесе татмалла туянчĕ. Капла мана урамра иртен-çӳрен çаврăнса пăхсах ăсатать пуль?

Кĕпе те, хĕллехи атă та илсе пачĕ тăрук кашни пуса шутлама пăрахнă упăшка. «Патша майринчен нимпе те кая мар», – тĕкĕр умĕнче саркаланнă май хампа киленмесĕр епле чăтăн?

Унччен пĕрре те парикмахерскинче пулманскер илем салонне кĕрсе тухрăм. Çӳçе кăтралатрĕç, питкуçа сăрларĕç. Каллех хам çине пăхса тăранаймастăп – тĕнчере манран илемлĕ çын çук та тейĕн.

«Олегăн арăмĕ те килнĕ», – пире курсанах сăмах хушрĕ хуçа. Мана пит çăмартинчен чуп турĕ, кĕрĕке хывса çакма пулăшрĕ. Кайран та ман йĕри-тавра чупкаларĕ: ташша чĕнчĕ, асăнмалăх парне тыттарчĕ.

«Санăн арăму мĕнле чипер», – упăшкан юлташĕсем те ăшă сăмахпа хавхалантарчĕç. Тĕссĕрленнĕ курткăпа ула-чăла кĕпе тăхăннă пулсассăн кам асăрхĕччĕ-ши мана? Сĕтел хушшинче те мăшăрăм хăйĕн ытамĕнчен вĕçертмерĕ. Юратать çав вăл мана, юратать... Эпĕ те ăна никампа та улăштарас çук.

Çĕрĕпех эстрада артисчĕсем юрларĕç, таврара фейерверк çути ялкăшрĕ. Эпир ывăннине туймасăр ташларăмăр...

**Елена ЦВЕТКОВА.**

ПОЭЗИ КАÇĔ

# Çуркунне, хĕрарăм, юрату...



Çак сăмахсем ытларах янăрарĕç Шупашкарти К.В.Иванов ячĕллĕ литература музейĕнче иртнĕ поэзи каçĕнче. Уява хĕрарăм çыравçăсене йыхравланă. Ахальтен мар, паллах: ара, кĕçех пĕтĕм тĕнче чиперуксене ăшă сăмахсемпе пĕрлех капăр чечек çыххисемпе, хаклă парнесемпе савăнтарĕ. Çыравçăсен пĕрле пухăнмалли тепĕр сăлтав та пулчĕ çак тапхăрта – пуш уйăхĕн 3-мĕшĕнче пĕтĕм тĕнче Писатель кунне паллă турĕ. Çапла икĕ уяв пĕрлешсе хăватланчĕ те юхрĕ юрă, янăрарĕ чăваш сăмахĕ... Чунсене çĕклентерсе, тавралăха илем кӳрсе...

Самана улшăнни çыравçăсене те витĕм кӳмесĕр иртмерĕ. Алла калем тытса йĕрке хыççăн йĕрке çуратакансен хушшинче çамрăксене питех кураймăн. Паян çыравçă патшалăх пулăшăвне туйсах каймасть, мĕн тăвăн? Çавăнпа та çăкăрлăх калем тытса ĕçлесе илеймĕн. Аслăрах çултисем, телее, тертлĕ те асаплă çак çултан пăрăнмаççĕ. Чунран тухнă йĕркесене, хайлавĕсене кĕнекене пухса вăй çитнĕ таран вĕсене хăйсен шучĕпех кун çути кăтартма тăрăшаççĕ. Çулсем иртни çыравçă пикесен сăввисенче те палăрать. Хĕрарăмсен уявне эпир чи малтан аннесемпе çыхăнтарма хăнăхнă-çке. Чи ачаш сăмаха çак кун ăна парнелес килет. Шел, вăхăт ытла та шелсĕр, аннесене пирĕнтен яланлăхах уйăрса илсе каять. Чĕрĕ чух вара вĕсене, тен, упрама та пĕлместпĕр, шеллесе те йăпатса çупăрлама хевте çитерейместпĕр... Альбина Юрату тата Зоя Сывлăмпи шăпах çак шухăша палăртрĕç уявра.

Маргарита Гурьева пуканепе тухса пухăннисене çурхи уявпа саламланă май чăваш писателĕсене виçĕ союз пĕрлештерсе тăни пирки йĕплесе илме манмарĕ. Юрать-ха украинсем пек пăтранмаççĕ çыравçăсем, виçĕ союзĕ те пĕр-пĕринпе чиперех килĕштерсе пурăнать. ЧР Профессионал писательсен пĕрлĕхĕн ертӳçи Сергей Павлов ахальтен мар хĕрарăм çыравçăсене саламланă май çак кун туслăх, тăванлăх уявĕ пулнине палăртрĕ. Тĕнче, уйрăмах – чăвашăн, хĕрарăм хулпуççийĕ çинче тытăнса тăнине те йышăнчĕ писательсен ертӳçи. "Хĕрарăм паян арçынна пур енлĕн хĕстерет: сцена çинче те, литературăра та... Этем чунне лайăхрах ăнланаççĕ вĕсем, хăйсем те туйăмлăрах. Çав вăхăтрах вулакансен хушшинче те ытларах – хĕрарăм... – чăнлăха йышăннă май чиперуксенчен каçару ыйтма та манмарĕ пултарулăх пĕрлĕхĕн ертӳçи. – Каçарăр, тен, сире юратса çитерейместпĕр... Анчах та пĕлĕр: эпир сире хисеплетпĕр". Çапах арçынпа хĕрарăм пĕрлĕхĕ кăна пурнăçа та, пултарулăха та малалла аталантарать – çакна "Хыпар" çуртĕн тĕп редакторĕн çумĕ, ЧР Профессионал писательсен союзĕн ертӳçин çумĕ Геннадий Максимов палăртрĕ. Хĕрарăм çыравçăсене тав тунă май вăл малашне те пултарулăх çулĕпе пĕрлех утасса шаннине пытармарĕ.

Хĕрарăмсене уявпа арçынсем саламлани питĕ кăмăллă паллах. Чăваш ӳнерçисен ячĕпе Василий Кузьмин тата Александр Иванов сăмах каларĕç. Вĕсем те паян хĕр-хĕрарăм пур енлĕн хастарлăх кăтартнине палăртрĕç. Сочире иртнĕ Олимпиадăра та акă Чăваш Ен чысне пике хӳтĕлерĕ. Кĕрешес енĕпе мĕн авалтан увсенче арçынсем вăй висчĕ. Халĕ вара кур та тĕлĕн – ку енĕпе те Раççей чемпионачĕсене чăваш арĕ мар, хĕрĕ хутшăнать! Халăхăмăр тĕррине тĕнче умне ӳкерчĕк хальлĕн хĕрарăм çĕклет. Керамика, пукане ăсталас енĕпе каллех "юбкăллисем" малта. "Арçынсем таçта çухалнăнах туйăнаççĕ..." – аптранă ӳнерçĕсем. Хĕрарăм пулсан çапах та чăваш ӳнерçисен пĕрлешĕвĕ илемленессе, хастарланасса, хăватланасса шанаççĕ вĕсем...

Уяв кăмăлне пĕрле пайланă май çыравçăсем çĕнĕ хайлавĕсемпе паллаштарчĕç. Светлана Гордеева çурхи тумла юххинче до-ре-ми нота кĕввине илтет. Лидия Сарине хĕрарăм телейне мăнукра курать. Галина Кĕмĕл ямб-хорей килĕшĕвне тишкерчĕ хыççăн рифма чуста пек хăпарнине асăрханă. Валентина Пугачевăна амăшне ĕмĕрлĕхех çухатнă хыççăн тĕнче арканнăн туйăннă. "Çапах та аннепе чуна уçса калаçма, тен, кая юлман? Тен, кантăкран карăнакан çутă шăпах эсĕ, аннеçĕм?" – шырать чун канăçне сăвăç. Лидия Филиппова чăвашлăха халалланă хайлавĕпе паллаштарчĕ. Нина Пăрчăкан вара сăвă вуланипе кăна çырлахмарĕ, илемлĕ юрă та шăрантарчĕ. Унпа ăмăртса тенĕ пек уяв кăмăлне Клара Осокина ертсе пыракан "Тарават" ушкăн хăпартлантарчĕ.

**Рита АРТИ.**
**Олег ЦЫПЛЕНКОВ сăн ӳкерчĕкĕ.**

ЧУНРИ

# Çепĕçлĕхĕ, ачашлăхĕ аса килет...

Анне кăмака умĕнче икерчĕ пĕçерни, пӳртре çăкăр шăрши сарăлни аса килет... Кун-çул парнеленĕ çын хатĕрленĕ тутлă чăкăт пеккине урăх çисе курман пулĕ эпĕ.

Çемьере кĕçĕнни пулнăран анне мана яланах хăйĕнпе пĕрле илсе çӳретчĕ. Тен, çавăн чухнех пирĕнтен ытла ир уйрăлса каясса сиснĕ-ши унăн чунĕ? Каççерен лармана илсе каятчĕ. Сурăм вăрманне вĕçĕмех măйăр татма çӳреттĕмĕр. Аслисенчен çухалса юласран питĕ шикленеттĕм. Кашкăр йăви çумĕнченех иртеттĕмĕр-ха та, хир сысни йĕрне те асăрханă.

...Çывăрма выртсан вара çепĕççĕн çупăрлатчĕ. Унăн юмахĕсене итленĕçемĕн итлес килетчĕ. Кашни каçах çĕннине каласа кăтартатчĕ аннем. Халĕ те ун ытамне лекес, çемçе аллин ачашлăхне туяс килет. Хăй хăр тăлăх çитĕннĕскер ачисемшĕн чун ăшшине шеллемерĕ вăл.

Анне, Елизавета Крылова, Вăрнар районĕнчи Кушар Юнтапа ялĕнче çуралса ӳснĕ. Çемьере виçĕ пĕр тăван, пиччĕшĕпе йăмăкĕ, пулнă. Анчах кĕçĕнни чирлесе пĕчĕклех вилнĕ. Анне амăшĕнчен виçĕ çулта юлнă. Тăлăхсене ама çури пăхнă. Вăрçă пуçлансан ашшĕне вут-çулăм хирне илсе кайнă. Сталинград патĕнчи çапăçу хыççăн вăл хыпарсăр çухалнă пирки çыру килнĕ. Ачасем хăр тăлăха юлнă. Юрать-ха, вĕсене ашшĕн йăмăкĕ пăрахман. Вăл качча тухмасăр çавсене вĕрентсе пурнăç çулĕ çине кăларнă. Аннепе пиччĕшне мăшăрлантарсан тин хăй çемье çавăрнă.

Анне ялти шкула ĕçлеме килнĕ учительпе пĕрлешнĕ. Аттепе 9 ачана кун çути кăтартнă. Атте-анне тивлечĕ халĕ те пире пурнăçра пулăшса пырать.

**Марина АРСЕНТЬЕВА.**
Элĕк районĕ.

САВĂ СĔВЕМĔ

# Анне ăшши

*Василий КОШКИН-КЕРВЕН*

## Хĕрарăм

Кашни пĕлет: сĕм авалах е халĕ
Асамĕ пĕр пекех чипер йăлан –
Хĕрарăма хавхалану халалĕ
Парнелемен поэт пачах пулман.

Чылай чухне арçыннăн
ăраскалĕ,
Шăпи килет-çке савнă
мăшăртан.
«Чăнах çапла», – тесе пĕр
харăс калĕ
Маттур тус-йышăм пĕтĕм
кăмăлтан.

Сӳнми телейĕн шанчăклă
хуралĕ –
Ĕçчен хĕрарăм – кил ăшши
ялан.
Чун хăрнă çулçăлла часах
хуралĕ
Ун çутă туйăмне манса кайсан.

Вут пек хĕрӳллĕ юрату хавалĕ
Ултав-суяшăн – чи хаяр тăшман.
Вăл нишлĕхе çунтарĕ те хăвалĕ,
Унпа юнашарах пуласчĕ ман.

Е питĕ пăрнăç пурнăçăн усалĕ
Хĕрарăмран килет-и ăнсăртран?
Пĕл каçарма ăна, чуну тасалĕ
Шăпу телей шанса памалăх сан.

Мучин пулать-и юр пекех
сухалĕ,
Хăпмасть-и чирĕ тепĕр
чух унран –
Хĕр çураçни аса килсен çухалĕ
Тарса васкавлăн ватлăхĕ чунран.

Хĕрарăмăн асамлă-ши вăй-халĕ?
Çĕклет пире çут çăлтăрсем
таран.
Çакна хĕвел систернĕн,
пĕлтĕм халĕ:
Йăлтах килет чи ырă кăмăлтан!

Сар хĕвел пек савнăç халаллатăн
Юнашар пурăнакансене.

Çепĕç чечек пек ачаш хĕрарăм,
Ăшшăн çеç пăхаççĕ куçусем.
Танлашаймĕ санпала çут
сывлăм
Ырăлăхĕпе, хитрелĕхпе.

Ăш чĕреллĕ, тарават хĕрарăм.
Эс ăçтан тупан-ши вăй-халне?
Ыттисемшĕн вĕçĕм тăрăшатăн
Тепĕр чух мансах хăвăн çинчен.

Тивĕç эсĕ телее, хĕрарăм.
Сансăр çут тĕнчен илемĕ çук.
Сан ятпах янратăр манăн сăввăм,
Пирĕшти эс çакă çĕр çинче.

## Ытарайми анне

Шухăшсем сар кайăк
пулса вĕçрĕç
Сан патна, ытарайми анне.
Ĕмĕтсем тĕвĕленсе васкарĕç
Тăван ен, тăван кил ытамне.

Мăшăр çунат çук çул
кĕскетмешкĕн,
Сывлăм çийĕн выртрĕ
ансăр çул.
Савăнать чĕрем анне пурришĕн,
Унсăр пушă пулĕччĕ кун-çул.

Куç тулли телейĕм, чĕр
чечекĕм,
Эсĕ – пурнăçăм, аннем, тĕрек,
Ырăлăх чунтан парнелекенĕм,
Пирĕштийĕм, туррăм, пурăн тек.

Кăн-кăвак куçра мĕн сăлтавпа-ши
Кĕç мĕлтлетрĕ кĕмĕл пек
мерчен?
Ах, анне чĕри, мĕн-ма
çемçе-ши...

Савнăçпа тапинччĕ вăл куллен.

*Маргарита ПРОКОПЬЕВА*

## Анне, пурăн ĕмĕрех

Аннепе кил-çуртăм хăтлă,
Чун-чĕре тапать хĕм-вутлăн.
Ăшă кăмăлна санне
Ытарма та çук, анне.

Вĕресе тăрать ун ĕçĕ,
Курăнмасть нихçан та вĕçĕ.
Пухăнаççĕ хăнасем,
Тăвансем те ачасем.

Аннере тĕрек куратпăр,
Пурнăç илемне туятпăр.
Анне, пурăн ĕмĕрех,
Санпа пурнăç хитререх.

## Анне – чăн телей

Анне кулли – сӳнми хĕвел,
Анне алли – тулать тĕпел.

Анне килте – çунать вучах,
Анне хирте – тулли пучах.

Анне пурри – кун-çул утти,
Вăл ăс пани – инçет çути.

Анне пĕрле – çунать хĕлхем,
Кил-çуртăмра çиçет илем.

Аннеçĕм – чун туйăмĕнче,
Хĕрӳлĕх пур ытамĕнче.

Анне çемьешĕн – çут тивлет,
Ăна кашни ача пĕлет.

Анне пур чух – кун-çул
мерчен,
Унпа юлмастăнах пĕччен.



*Галина ЯКОВЛЕВА-ÇУТКӲЛ*

## Пурнăç тыткăчийĕ эс, хĕрарăм

Эсĕ пурнăç тыткăчи, хĕрарăм,
Санпала илемленет тĕнче.

# Юлашки укçине пухса Сочие çул тытнă çынсем

## çинчен Дмитрий Дюжев каласа кăтартать



**Пĕр шухăшласан, ку таранччен спортра курăнсах кайман Дюжев ăçта та Сочире иртнĕ Олимпиада ăçта… Анчах икĕ пачах çыхăнса тăман пек туйăнакан çак ăнлавăн та пĕр пекки пур иккен. Пĕрре кăна та мар. Кинорежиссуринче хăюллă утăмсем тăвакан Дюжев Елена Бережная тата Антон Сихарулидзе фигуристсем пирки кăрлач уйăхĕн вĕçĕнче экран çине тухнă “Чемпионы” фильм валли новелла ӳкернĕ. Унсăр пуçне Никита Михалков, Владимир Машков, Сергей Безруков, Константин Хабенский, Михаил Пореченков тата паллă ытти ĕçтешĕпе пĕрле Олимпиада-2014 уçнă çĕре хатĕрленĕ роликре ӳкерĕннĕ. Тата тепĕр самант – хамăрăннисен ăмăртăвне хăйĕн куçĕпе курмашкăн Олимпиадăна Сочие вĕçтерсе çитнĕ.**

### Тӳпе

**– Сочи сывлăшĕ Олимпиада вăхăтĕнче мĕнле пек туйăнчĕ, Дмитрий?**

– Чăн та, Олимпиадăна хамăн тӳпене хывнăнах туйăнчĕ! Пĕлетĕр-и, манран вăхăт-вăхăт ĕмĕтĕмсем пирки ыйтаççĕ. Кун пирки маларах, ача чухне, шухăшламалла пулнă паллах. Халĕ, вăтăр пилĕк çула çитсен, Олимпиадăна хутшăнса çĕнтересси е уçлăха вĕçесси пирки ĕмĕтленмелли çук ĕнтĕ. Вăт пирĕн маттуркка Аделина Сотникова вун çиччĕре медаль çĕнсе илчĕ! Çакна никам та кĕтмен тата! Пĕччен ярăнса Раççей хĕрĕсенчен никам та ылтăн çĕнсе илмен ку таранччен! Эпĕ пĕчĕк чух Олимпиадăна хутшăнма мар, хăть ăмăртусене хам куçпа курма ĕмĕтленнĕ. Анчах та иртнĕ ĕмĕрĕн 80 çулĕнче эпĕ иккĕ кăна тултарнă. Çавăнпа Мускавра иртнĕ вăйăсене атте-аннепе пĕрле телевизорпа кăна пăхнă.

**– Сочире вара плана туллин пурнăçларăр: клипра ӳкерĕнтĕр. Билет гонорар вырăнне ыйтмарăр-и?**

– Çук, ун пирки шухăш та пулман. Ролике Джаник Файзиев тата Максим Осадчий хатĕрлерĕç. Манăн пĕчĕк эпизод кăна пулнă – эпĕ монтажник сăнарне калăпларăм. Укçа пирки никам та калаçман. Ку ĕçе хутшăнма чĕнни те телей. Курма каясси пирки вара… Ала сулнăччĕ ĕнтĕ, ку Олимпиадăна та телевизорпа кăна курассипе çырлахнăччĕ. Манăн график питĕ çăтă: репетицисем, спектакльсем... Вăйăсене уçнине арăмпа пĕрле Пĕрремĕш каналпа пăхрăмăр. Вара чăтаймарăм: “Тен, Танюшка, тытатпăр та атя каятпăр? – терĕм. – Кайса курмасан кайран ĕмĕр тăршшĕпе ӳкĕнсе пурăнăпăр…” Пирĕн ывăл халĕ пиллĕкре. Вăл ача садĕнче Олимпиадăна халаллана уява хутшăннă. Вăт Ванечка ӳссе çитĕ те ыйтĕ: “Атте, эсĕ мĕншĕн кайман, ара, унта? Тĕлĕнмелле истори вĕт-ха ку! Хăв вара мана Авалхи Греци халапĕсене каласа кăтартаттăн...” Эпĕ вара ун умĕнче хам театрта вилсе кайса репетици ирттернипе тӳрре тухма хăтланăп… Пĕр сăмахпа, пуçлăхсене çывăхри икĕ кунхи репетицисене пăрахăçлама ӳкĕте кĕртрĕм, расписанире çапла “уçă чӳрече” тупрăм, “Аэрофлот” рейсне тишкерсе хама юрăхлине суйларăм, арăмпа самолета лартăмăр та – вĕçтертĕмĕр. Сочире кассăра кăштах черет тăма тиврĕ – черетлĕ вăйăсене ыттисемпе танах тăрса билет туянтăм.

**– Хисеплĕ хăнасене валли уйăрнă вырăна лартмарĕç-им?**

– Эпĕ хамăн тăкаксене хамах саплаштарма пултаратăп. Сăмах май, Сочире тĕлĕнмелле çынсемпе пĕрре мар тĕл пулма тӳр килчĕ – вĕсем Олимпиадăна хăйсем курассишĕн юлашки укçине те шеллемен. Вăт ку – чăн вырăсла! Аса илмелли пулать хăть.

**– Сирĕн асра та юлĕ-и?**

– Паллах. Кун пек самант нумай пулчĕ. Эпир йĕлтĕрçĕсен ăмăртăвне курмашкăн кайма тухнăччĕ. Чăн та, малтанах палăртнă вырăна çитейместĕп пулĕ тесе шикленсе ӳкрĕм. Адлертан çӳлелле, ту çинелле, каякан электричкăран тухрăмăр та, перрон çинчех кино курма юратакансен ункине çаклантăмăр. Мана палласа илчĕç те автограф, пĕрле сăн ӳкерĕнме ыйтма пуçларĕç… Пурте хаваслă, сăн-питĕнче уяв кăмăлĕ тапса тăрать. Хирĕçлейместĕн те кун пек чухне – çынсем çĕр-шывăн тĕрлĕ кĕтесĕнчен килнĕ-çке! Тавах информаци центрĕнче ĕçлекенсене – Таньăпа иксĕмĕре ярса илчĕç те трамплинсем патне илсе кайрĕç, трибуна çине хăпарма пулăшрĕç. Каçхине вара “Айсберг” кермене фигуристсен ирĕклĕ программине курма кайрăмăр. Унта пирĕн спортсменсем “ылтăн” тата “кĕмĕл” çĕнсе илчĕç. Пĕтĕм зал: “Раççей! Рас-çей!” – тесе кăшкăрма пуçласан эпĕ те ура çине сиксе тăтăм, ыттисемпе пĕрле шăхăртăм. Хамран çавăн чухлĕ туйăм тапса тухнинчен хам та тĕлĕнтĕм. Халăхра усаллăх çукчĕ – çавă савăнтарчĕ. Ытти çĕр-шыв спортсменĕсем такăннăшăн никам та хĕпĕртесе: “Çав кирлĕ сире!” – тесе кăшкăрмарĕ. Паллах, хамăрăннисемшĕн пăшăрхантăмăр, анчах ыттисене те тĕксе яманни сисĕнчĕ.

### Иккĕн – иккĕнех

**– Халĕ эсир илемлĕ хусканусем туса ярăнас енĕпе специалиста çаврăнтăр пулĕ ĕнтĕ?**

– Сочи хыççăн-и?

**– Тата “Чемпион” альманах хыççăн.**

– Георгий Малков продюсер малтан урăх сюжет сĕннĕччĕ – мана вăл вăйсăр пек туйăнчĕ. Бережная тата Сихарулидзе историйĕ вара тӳрех ярса илчĕ чунчĕрене.

**– Анчах вăл илемлĕ фильм вĕт?**

– Çапла. Тĕп рольсене Татьяна Арнтгольца тата Константин Крюкова чĕнтĕм. Çĕнтерӳ хакĕ пирки кинематографи чĕлхипе каласа кăтартас килчĕ. 1996 çулта Елена тренировкăра тĕлĕнмелле йывăр суранланнине пурте ас тумаççĕ те пулĕ – партнерĕ конькипе ăнсăртран унăн тăнлав шăммине лектерсе аркатнăччĕ. Инкек пирки пĕлсенех Антон, Еленăна тахçанах килĕштерекенскер, пĕтĕм ĕçе пăрахса ăш çунтармăшĕпе юнашар пулас тесе вĕçтерсе килет. Нейрохирурги икĕ операци витĕр тухма тивет спортсменкăн, калаçма, çырма, вулама, утма çĕнĕрен вĕренет… Пăр çинче ярăнас шухăш-и унта? Анчах Антон çине тăрать. Ленăран пĕр утăм та хăпмасть вăл, алă çинче тенĕ пек йăтса çӳрет. Пăр çине чееленсе астарса кăларать… Комăран тухнăранпа çапла тăхăр уйăх кăна иртет, Лена вара коньки тăхăнса пĕрремĕш утăмсем тăвать те. Çапах та пысăк спорта таврăнма хăрать-ха вăл. Антон шанăç кĕртет – иккĕн пĕрле вĕсем пĕтĕм йывăрлăха парăнтарĕç кăна мар, çĕнтерĕç те… Кĕçех çакна тĕнче курса ĕненет. Бережнаяпа Сихарулидзе Раççей, Европа тата тĕнче чемпионачĕсенче пĕрре кăна мар хăпараççĕ пьедестал çине. 2002 çулта Америкăра Солт-Лейк-Ситире иртнĕ Олимпиадăра çĕнтереççĕ.

### Юрату вырăнне – медаль…

Çитĕнӳ… Еленăпа Антон ылтăн медаль выляса илнĕ-ха, анчах та... юратăва çухатнă. Пăр çинче чаплă мăшăр пулса юлнă, кулленхи пурнăçра вара килĕшĕве сыхласа хăварайман. Бережная каланă тăрăх, ăна чемпион титулĕ питех илĕртмен, ăмăртусенче çĕнтерме ытларах Сихарулидзе ăнтăлнă. Тĕллевне пурнăçланă. Шел, çĕнтерӳ ытла та хакла кайса ларнă… Елена унăн пурнăç тĕллевĕ пулма пăрахнă. Юмахри пек: сулахаялла кайăн – утна çухатăн, тӳрĕ кайăн – инкек тĕлне лекĕн… Пурнăçра тӳлевсĕр нимĕн те пулмасть. Çакăн пирки ӳкертĕм те эпĕ новелла – спорт çинчен кăна мар, çын шăпи çинчен.

**– Кита ачашларăр пулĕ?**

– Пысăк тăхтав хыççăн фигуристсем пăр çине пĕрремĕш тухнă чух ăна алăпа сĕртĕнеççĕ. Çакă кита ачашлани шутланать. Йăлана эпĕ те пăсмарăм.

**– Ӳкернĕ чух Антонпа тата Еленăпа хутшăнаттăр-и?**

– Вĕсем пире канашсемпе пулăшатчĕç. Тавах вĕсене уншăн. Çак тапхăрпа вĕсен пурнăçĕнчи чи ырă самантсемех çыхăнман. Çапах та турткалашса тăмарĕç. Тепĕр тесен, нимĕн те туман çын кăна йăнăшмасть...

### Ĕненӳсĕрлĕх çылăхĕ

**– Плющенко пирки мĕн калама пултаратăр?**

– Çаврăнса пăхмасăр калаçас тăк лару-тăрăва шалтан пĕлмелле. Эпĕ ун чухлех пĕлместĕп, çавăнпа та Евгений утăмне хак пама тăхтăп. Вăл – чĕрĕ легенда, чаплă спортсмен, тăватă Олимпиадăна хутшăннă, кашнинчех пьедестал çине хăпарнă. Тепĕр енчен, шăпах Плющенко çак каларăша çирĕплетрĕ: юратуран курайманлăх патне – пĕр утăм. Çапах та кирек мĕнле медалĕн те тепĕр енĕ те пур, çав шутра – Олимпиадăра çĕнсе илнин те. Куракан юратăвĕ таканари шыв пек вылянса тăрать. Çакна хам туйса курнă, çавăнпа калатăп. 2011 çулта кĕтмен çĕртен çул çинче инкеке çакланнăччĕ. Хама айăплă туймастăп, çавăнпа никамран каçару ыйтма та сăлтав çук. Анчах хыпар Интернетра сарăлсан мĕн кăна çырмарĕç ман çинчен! “Артист тата! Машинăпа ачасене таптать! Чулпа персе вĕлермелле ăна!” Хам куçа хам ĕненмесĕр вулаттăм. Никам та итлесшĕн те, ăнланасшăн та мар. Эпĕ халăх умне, сцена çине тухма хăракан пултăм: çул çинчи инкек кунта мĕнле ахрăма çаврăнасса пĕлместĕм.

**– Сирĕнпе пĕрле кулянатпăр…**

– Хама сутнăнах туяттăм. Эпĕ уçă чунлă, хĕвре нихăçан та чул çĕклесе çӳреместĕп. Кунта вара мăшкăлтăк шывĕнче чăпăл тăваççĕ мана... Юлашкинчен тата çакна пиарпа танлаштарма пуçларĕç! Паллах, Интернетра мĕн çырнине вуламасан та юратчĕ, анчах та эпĕ çурăм хыçĕнче пăшăлтатнине чăтма пултараймастăп, мана куçран калаччăр. Маншăн ку урок пулчĕ. Плющенкăшăн та çаплах пулĕ тесе шухăшлатăп. Çавăнпа та унăн пахчине чул ывăтмăп. Тепĕр тесен, кунта анлăрах пăхмалла. Пирĕн тĕнче курăмĕнче ĕненӳсĕрлĕх çылăхĕ хуçаланать. Калăпăр, эпир чиркĕве çӳретпĕр, çурта çутатпăр. Анчах та мĕн те пулин сиксе тухсанах сулахай хулпуççи урлă суратпăр, йывăçа шаккатпăр. Паллă çынсемпе те çаплах. Малтан вĕсене çĕклетпĕр, кăшт йăнăшсанах пылчăкпа варалатпăр. Ырăпа усала уйăрма пĕлменнипе те çапла пулса иртет ахăр. Турă патне те çын ырлăхран мар, хурлăхран пырать.

### Пирĕшти юнашарах

**– Эсир ун патне мĕнле çитнĕ?**

– Ĕненӳ ача чухнех çитнĕ ман пата. Вăхăчĕ лăпкă марччĕ ун чухне. Пиллĕкмĕш е улттăмĕш класра эпĕ килтен тухса тарма тĕв турăм. Темĕнле, йăлт пĕр харăс йăлăхтарчĕ – шкул, атте-анне, уроксем... Эпĕ дзюдопа туслашнăччĕ, хама хӳтĕлеме пĕлнĕ пек туйăнатчĕ. Арçын ачасен хушшинче те чăнкă шутланатчĕ ку. Çапла пĕр каçхине атте-аннепе шавлă калаçу пулнă хыççăн алăка хам хыççăн шалтлаттарса хупрăм. Урамра нумай çӳрерĕм, хам ăçталла утнине те пĕлмерĕм. Шăнса та хытрăм ĕнтĕ. Чиркӳре çутă çуннине курса унта кĕтĕм. Пачăшкă мана курчĕ те хăй патне чĕнсе илчĕ. Ман çине хĕрес хывнă хыççăн ыйтса пĕлме тытăнчĕ. Эпĕ ним пытармасăр йăлт тĕрĕссине каласа патăм. Мĕн калаçнине ас тумастăп, пачăшкăн юлашки сăмахĕсем кăна асра: “Халĕ чиркӳрен тухăн та управçă пирĕштие туйса илĕн. Вăл сана килне илсе кайĕ. Пурнăçра чи хакли – аçу-аннӳ. Вăрçассинчен ан хăра. Нимĕнрен те ан хăра. Малашне текех пĕччен нихăçан та юлмăн. Пирĕшти яланах сан çумăнта пулĕ”. Çапла каласа мăйран хĕрес çакса ячĕ.

**– Сыхласа хăвартăр-и ăна?**

– Шел те, çук. Черетлĕ хут хваттер улăштарнă чух çĕтернĕ. Эпир тĕрлĕ хула тăрăх нумай çӳренĕ вĕт. Камышин, Волгоград, Павлодар, Аçтăрхан… Ун чухне вара, çав каç, эпĕ тӳрех киле кайрăм. Атте-анне мана таçта та шыранă, тупайман. Паллах, çухатнăскерсем мана вăрçмарĕç, тупăннăшăн савăнчĕç кăна. Эпĕ каçару ыйтрăм… Çавăнтанпа хĕресе мăйран хывмасăр çӳретĕп. Пĕррехинче шкулта ĕç урокĕнче вăл кĕпе çухийĕнчен тухса кайнă та пионер галстукĕ çине выртнă. Учитель пырса пăшăлтатрĕ: “Дима, пытар, никам та ан куртăр”.

**– Юлашки çулсенче эсир сахалрах ӳкерĕнме пуçларăр. Е ку туйăнать кăна-и?**

– Нумай сĕнĕве йышăнмастăп. Кăсăклă ĕçсем кĕтетĕп. Çав вăхăтрах режиссурăра тĕрĕслетĕп хама. Нумаях пулмасть çывăх юлташăм Сергей Безруков режиссура енĕпе хăйĕн пĕрремĕш ĕçне, “Нашла коса на камень” спектакле, чĕнчĕ. Хаваспах килĕшрĕм. Сережа та манăн “Мамы” новеллăра ӳкерĕннĕччĕ.

**– Хире-хирĕçле ĕçлетĕр-и?**

– Апла мар пуль. Савва Васильков сăнарĕ питĕ кăсăклă. Сережа тĕп героя калăплама пулăшрĕ, эпĕ ăна йăлтах пăхăнтăм. Ăнлантăр пулĕ – эпĕ хирĕçме питĕ юратман çын. Анчах хам сăмаха калама та пултаратăп...

**/«7 дней»/.**

Кил хуҫи:

– Сире кăмпа хурса парам-и?

Хăна:

– Тавтапуҫ, эпĕ кăмпа пуҫтарма кăна юрататăп.

Кил хуҫи:

– Мĕнле калатăр… Эпĕ урайне сапаласа пама та пултаратăп.

* * *

– Эсĕ упăшку патне саккăрмĕш хут таврăннă теҫҫĕ. Тĕрĕсех-и?

– Мĕн тăвас-ха манăн? Эпĕ тухса каятăп кăна, унăн тӳрех таҫтан укҫа тупăнать…

* * *

– Ирхи пилĕк сехетре киле кам таврăнчĕ паян?

– Мăшăрăм, кушака алăк уҫса кĕртрĕм.

* * *



– Манăн арăм начарланма тĕв тунă, халĕ лаша утланса чупать.

– Усси пур-и?

– Паллах. Лаша 10 килограмм чакнă.

* * *

Диетăна пăхăнакан ҫын таракан пекех: кухньăна пырса хăвăрт ҫутă ҫутса ярсан аптраса кайнипе тарса пытанма хăтланать.

* * *

Качча тухакан хĕрсем ытларах чух 40-50 килограмм таяҫҫĕ – кун пек вĕсене упăшкин килне кĕме ҫăмăлрах. Кĕске вăхăтрах хайхисем кĕлетке йывăрăшне 2-3 хут ытларах ӳстереҫҫĕ – халĕ вĕсене килтен тĕксе те кăлараймăр…

* * *

– Мĕн пулчĕ, Вовочка?

– Аттепе анне ача ҫуратмалли ҫуртран шăллăма илсе таврăнчĕҫ. Манăн теттесем сирĕн патра выртчăр-ха хальлĕхе, мĕнле пепке илсе килнине пĕлместĕп-ҫке: темĕн кĕтме пулать унран?..

* * *

Хĕрарăм корпоратив уявĕнчен таврăннă.

– Ан кăшкăр, ан вăрҫ, чунăм, – тет хайхискер упăшкине. – Эпĕ сана йăлтах каласа кăтартăп. Пурте эрех ĕҫрĕҫ, эпĕ ĕҫмен, пурте арҫынсемпе чуп турĕҫ, эпĕ чуп туман. Салат ҫирĕм, ташлакаларăм, конкурссене хутшăнтăм. Санăн арăму маттур. Ыйтусем пур-и?

– Пур. Кĕпӳ ăҫта?!

* * *

Кукша пуҫлă арҫын аптекăна кĕрет.

– Сирĕн ҫӳҫе ӳсме пулăшакан препарат пур-и?

– Паллах. Акă, тытăр.

– Чăнах та пулăшать-и?

– Ав ҫавă мăк сухаллă, ҫăра ҫӳҫлĕ ҫынна куратăр-и? Манăн арăм ку. Ҫак эмелпе усă курма мар, пăккине кăна уҫса шăршласа пăхнăччĕ вăл…

* * *

Ялти ҫул ҫинче машина пылчăка лакса ларнă. Хуҫи пулăшу шырама каять. Пĕр фермер патне ҫитет. Мĕн пулса иртнине каласа кăтартать. Фермер пулăшма хаваспах килĕшет. Машинăна лашаран кăкараҫҫĕ.

– Турт, атя, Хура куҫ! – кăшкăрать фермер.

Лаша чăлт та хускалмасть.

– Турт, атя, Шурă ҫамка! – кăшкăрать каллех фермер.

Лаша каллех хускалмасть.

– Турт, атя, Ҫăлтăр! – лăпланмасть фермер.

Лаша вырăнтан та тапранмасть.

– Турт, атя, Вăрăм хӳре! – хушать татах фермер.

Лаша машинăна пылчăкран ҫăмăллăнах туртса кăларать.

– Эсир мĕншĕн лашăра тĕрлĕ ятпа чĕнетĕр? – тĕлĕнет машина хуҫи.

– Пĕлетĕр-и, Ҫăлтăрăн куҫĕ курмасть, – ăнлантарать фермер. – Хăйĕн пĕчченех мекĕрленме тивнине пĕлсен вăл ним тусан та туртмĕччĕ.

**☺ И-ХИ-ХИК ☺**

* * *

Амăшĕ ывăлне ача садне пуҫтарать. Васкать хăй. Хăрах аллипе сăрланать, теприпе ывăлне тумлантарать. Килтен хыпаланса чупса тухаҫҫĕ. Кăштах утсан хĕрарăм – ачине:

– Тăхта-ха, алсиш илме маннă, аллу шăнмарĕ-и?

– Ҫук, ура шăнчĕ – ҫăм атăсăр…

* * *

Вĕрентекен – вĕренекене:

– Эпĕ сана малтан пĕр пакша парăп, унтан иккĕ, кайран тата виҫҫĕ. Пурĕ миҫе пакша пулать?

– Ҫиччĕ!

– Мĕншĕн – ҫиччĕ? Малтан пĕр пакша, унтан иккĕ, кайран тата виҫҫĕ… Миҫе?

– Ҫиччĕ!

– Хм-м… Юрĕ, урăхларах шутласа пăхăпăр. Эпĕ сана пĕр пан улми парăп, унтан иккĕ, кайран тата виҫҫĕ. Миҫе пан улми санăн?

– Улттă!

– Тинех! Халĕ вара – малтан пĕр пакша, унтан тепĕр иккĕ, кайран тата виҫҫĕ. Миҫе пулать?

– Ҫиччĕ!

– Ну, мĕншĕн ҫиччĕ-ха?

– Манăн килте пĕр пакша пурăнать ĕнтĕ!..

* * *

– Вăт харăсах икĕ арҫынпа тĕл пулатăп. Хăшне суйламаллине пĕлместĕп.

– Чĕрӳне итле – мĕн калать?

– Чĕре мĕн калатăр: упăшку пĕлсен вĕлерет тет…



## РЕКЛАМА ТАТА ПĔЛТЕРӲСЕМ

### ПРОДАЮ

**4.ПЛАСТИКОВЫЕ ОКНА.** Низкие цены. Рассрочка. Замер. Доставка – бесплатно. **Т. 89875766562.**

**5.Блоки керамзитобетонные** 20х20х40, 12х20х40, 9х20х40 пропаренные, гидро-вибропрессованные заводские от производителя – недорого, **цемент, песок.** Доставка. Разгрузка. Без выходных. Кассовый чек, документы. Т.8-960-301-63-74.

**7.Срубы** для бани. Т. 37-28-74.

**8.Гравмассу,** песок, **щебень,** торф, кирпичный бой, **керамблок, керамзит.** Пенсионерам, уч. ВОВ – скидки. Т. 89051990122.

**9.Гравмассу, песок, щебень,** керамзит, кирп. бой. Т. 89033583021.

**10.Сетку-рабицу** от производителя – более 80 видов, сетку сварную – более 30 видов, **профнастил,** гвозди, **столбы,** проволоку. Изготовление ворот, калиток. **Доставка.** Выездная сварка /генератор/. **Грузоперевозки.** Т.: 68-05-67, 34-70-70.

**16.СЕТКУ-РАБИЦУ** от производ-ля: чёрную, зелёную, оцинкованную – около 100 видов; **сетку сварную,** столбы, скобы, проволоку, калитки. Доставка. Без выходных. Т.: 683045, 8-937-952-22-11.

**20.Пластиковые ОКНА.** Низкие цены. Найдёте дешевле – уступим. Без вых. Т. 89625989686.

**21.Керамблоки, гравмассу, песок.** Т.: 8-903-345-63-07, 8-917-675-75-28.

**22.ОКНА пластиковые, железные ДВЕРИ.** Реально низкие цены. Гарантия. Т. 89871267170.

**23.Гравмассу, песок,** бой кирпича, **щебень.** Д-ка. Т. 89061355241.

**24.ГРАБЛИ, косилки, сажалки, копалки,** окучники, опрыскиватели. Доставка. Т. 89278533596.

**33.Гравмассу, песок, керамзит, щебень,** торф. Недорого. Доставка. Т. 89053465671.

**35.Блоки керамзитобетонные** от производителя. Высокое качество. Низкие цены. Доставка. Документы. **Т. 89373866629.**

**45.АКЦИЯ! БЛОКИ** КЕРАМЗИТОБЕТОННЫЕ 20х20х40 – **33** руб., 9х20х40, 12х20х40; **кольца** колодезные всех размеров от производителя, по низким ценам – бурение, монтаж; песок, гравмассу, щебень, торф, навоз, чернозем, КИРПИЧ в ассортименте. Д-ка. Т. 89196543499. Звоните!

**47.Керамблоки** 20х20х40 от производителя. Т.: 48-92-77.

**52.Пластиковые ОКНА,** железные **ДВЕРИ.** Замер, доставка – бесплатно. Без выходных. Т.: 89176529694, 89276679588.

**53.Отруби, зерно, к/корм,** сахар, мука. Доставка. Т. 89373916016.

### ПРОДАЮ

**59.СЕМЕНА кормовой свеклы "ЛАДА"** высокой репродукции. Тел.: 8/8352/ 73-39-11, 55-44-70, 8-961-346-38-34.

**60.СЕМЕНА** высокоурожайных **томатов, огурцов, перцев** и др. Тел.: 8/8352/ 73-39-11, 75-80-34, 55-44-70, 8-961-346-38-34.

**61.Блоки керамзитобетонные** от производителя. Гарантируем высокое качество. Низкие цены. Доставка. Т. 89876734754.

**66.Заборы кованые.** Т. 89276689587.

**77.ТЕПЛИЦЫ: 3х6** – 12000 р., **3х8** – 15000 р. Доставка. Т. 48-16-54.

**117.ОКНА Чувашии.** Пластиковые **окна,** железные **двери.** Замер. Монтаж. Скидки. Т. 89050281182.

**121.Песок, гравмассу, бой** кирпича, **щебень.** Т. 89196567752.

**134.Кирпич, кольца, ФБС блоки.** Д-ка манипулятором. Т. 44-73-53.

**144.Кирпич, керамблок, кольца.** Дёшево. Д-ка. Т. 213680.

### УСЛУГИ

**51.Бурение колодцев,** скважин, **кольца колодезные** высококачественные. Доставка. Тел.: 8-927-847-71-43, 89373790080.

**149.Бурение скважин** на воду. Т.: 89876740030, 89279933433.

**152.Бурение скважин** на воду. Т. 8-960-302-12-93.

### КУПЛЮ

**18.Бычков, тёлок, коров,** лошадей. Т. 8-962-599-47-06.

**104.Бычков, коров, тёлок, овец,** свиноматок. Т. 8-937-014-49-97.

**141.Коров, бычков и лошадей.** Т. 89030659909.


# Пуҫ ваттăш

**Владислав ПЛАТОНОВ /Шупашкар районĕ/ хатĕрленĕ**



**СЫЛТĂМАЛЛА:** 4. Клоун евĕр, шӳтлеме пĕлекенскер. 7. Шифр. 8. Мухтав сăвви. 9. Шаннă йăвара кайăк … . 10. Вăрăм хӳреллĕ попугай. 11. Сысна пăхакан – вырăсла. 15. Куҫ сапаланчăк курни. 18. Мунчари савăт-сапа. 19. «Хула» сăмах – ҫармăсла. 20. Вутă тиенĕ урапа. 21. Йывăҫ ҫав хатĕрте ҫăнăх упраҫҫĕ. 22. Эдит Леонидовна … – эстрада юрăҫи.

**АЯЛАЛЛА:** 1. Пирĕн ҫĕр-шывăн паллă киноактриси Нонна … . 2. Математкăри 3,14 хисеп. 3. Пирĕн эрăченхи Египтăн хĕрарăм патши. 5. Ҫур аки ĕҫченĕ. 6. Ҫар техникин смотрĕ. 12. Хистев! 13. Императрица. 14. ЧР сывлăх сыхлав министрĕ. 16. Тимĕр-тăмăр та, ҫĕтĕк те. 17. Ӳт ҫине тухса канăҫсăрлатать. 23. Нота.

**Иртнĕ номерте пичетленнĕ сăмах каҫмăш хуравĕсем**

**СЫЛТĂМАЛЛА. 5. Урташ. 8. Саман. 9. Пăшал. 10. Ампар. 11. Сарай. 13. Кăвак. 16. Кантăр. 17. Карлăк. 18. Кăшкар. 20. Самана. 21. Раман. 26. Чукун. 27. Сайка. 28. Микул. 29. Чабан. 30. Пăрҫа.**

**АЯЛАЛЛА. 1. Прима. 2. Канаш. 3. Чакак. 4. Какай. 6. Мăнтăр. 7. Шарлак. 12. Калăп. 13. Кăвар. 14. Капан. 15. Тăрна. 19. Разлив. 20. Саккун. 22. Пурак. 23. Сухал. 24. Тапăр. 25. Акаҫă.**


«ХЫПАР» Издательство ҫурчĕ" автономи учрежденийĕ

УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ: ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН ИНФОРМАЦИ ПОЛИТИКИПЕ МАССĂЛЛĂ КОММУНИКАЦИСЕН МИНИСТЕРСТВИ, “ХЫПАР” ИЗДАТЕЛЬСТВО ҪУРЧĔ” АВТОНОМИ УЧРЕЖДЕНИЙĔ

Директор – тĕп редактор А.П.ЛЕОНТЬЕВ

Редактор – М.М.ИЛЬИНА

Дежурнăй редактор – Е.М.АТАМАНОВА

Ҫырăнмалли индекс: 11515

Хаҫата Федерацин ҫыхăну, информаци технологийĕсен тата массăллă коммуникацисен тытăмĕнчи тĕрĕслев служби 2013 ҫулхи ака уйăхĕн 30-мĕшĕнче ПИ № ФС77-54016 номерпе регистрациленĕ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: 428019, Шупашкар хули, Иван Яковлев проспекчĕ, 13, Пичет ҫурчĕ, 6 хут, “Чăваш хĕрарăмĕ”

ЫЙТСА ПĔЛМЕЛЛИ ТЕЛЕФОНСЕМ: 55-07-21, 56-00-67, 56-03-54, 28-83-67, 28-85-33.

Факс: /8352/ 28-83-70, 56-20-07

Электрон почти: hypar@chtts.ru

Хаҫатри рекламăсăр тӳлевлĕ информаци материалĕсем “Реклама ҫинчен” Федераци саккунĕн 2 ст. килĕшӳллĕн **“Аталану ҫулĕпе”, “Ят-сум”, “Ĕҫ тата ҫын”, “Самана таппи”** рубрикăсенче пичетленеҫҫĕ.

Пичете графикпа 19 сехет те 30 минутра алă пусмалла, 21 сехетре алă пуснă. Хаҫата «Хыпар» Издательство ҫурчĕ» АУ техника центрĕнче калăпланă, «Чăваш Ен» ИПК» АУО типографийĕнче пичетленĕ. 428019, Шупашкар хули, И.Яковлев проспекчĕ, 13. 56-00-23 – издательство директорĕ. Тираж 9204. Заказ 824.